ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

46 (4408) №, 2014, ноябрь /чӳк/, 13
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ



## Аттепе аннене пĕрремĕш хут курни асрах-ха...

**Пысăк уяв çывхарса килнине шута илсе вĕрентекен ачасене «Юратнă анне» ятлă сочинени çырса килме хушрĕ. Çак сăмахсене илтсен Маша Конева йăл кулчĕ. Унтан хĕрача тарăн шухăша путрĕ.**

Темиçе çул каялла Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Çатракасси ялĕнчи Владимир Алексеевичпа Юлия Васильевна Макаровсен çемйинче хӳтлĕх тупрĕ вăл. Вĕсене пĕрремĕш хут курса юратса пăрахнине паянхи кунччен ас тăвать-ха...

Куславккари интернатра пурăннă чухне яланах юратнă амăшне кĕтетчĕ. Шел, пымарĕ вăл ун патне пĕрре те. Пĕррехинче вара палламан хĕрарăмпа арçын килчĕç интерната...

– Çак çемье ача усрава илсе каясшăн. Вĕсем патне камăн каяс килет? Анчах асăрхаттаратăп, вĕсем хулара мар, ялта пурăнаççĕ, – терĕ унти ертӳçĕ.

Çак сăмахсене илтсен Маша сиксе тăчĕ:

– Эпĕ! Эпĕ каятăп вĕсемпе! Мана ялта пушшех килĕшет! – тесе Юлия Васильевна патне чупса пычĕ.

Макаровсем çитес вăхăтра Машăна килсе илессине хыпарларĕç те тухса кайрĕç. Çакăн хыççăн çиччĕри хĕр ача канăçне йăлт çухатрĕ. Чӳрече умĕнчен кайма пĕлмерĕ. Кашни кун çав хĕрарăмпа ар çынна кĕтрĕ. Чăтăмсăррăн.

...Унтанпа шыв-шур нумай юхрĕ. Паян Маша çав тери телейлĕ. Ашшĕпе амăшĕ те, аппăшĕсемпе пиччĕшĕсем те пур унăн. Тăххăрмĕш класра лайăх паллăсемпе вĕренет.

– Çĕнĕ Шупашкарта çуралнă эпĕ. Атте виличчен аванах пурăнаттăмăр, вăл çут тĕнчерен уйрăлсан ахăр самана пуçланчĕ маншăн. Анне хуйхине пусарас тесе-ши «çутти» енне туртăна пуçларĕ. Килте ним çимелли çукчĕ. Пĕррехинче лавккана кайрăм, укçасăрах тетте илсе тухас терĕм. Тытрĕç мана. Куншăн аннене асăрхаттарса ятларĕç. Тĕрĕссипе, киле пачах та каяс килместчĕ. Унта мĕн кĕтнине пĕлеттĕм те-ха, подьездсенче, урамра шăнса ларни те пĕрре мар пулнă. Çавăнпах Ача çуртне лекрĕм, унтан ыттисемпе Куславккана лартса ячĕç. Çул çинче вĕçĕмсĕр кантăкран пăхса пытăм. Пĕр-пĕр çĕрте анне курăнмасть-ши терĕм. Хăпартланни ахалех пулчĕ. Таçталла васкакан машинăсемсĕр пуçне куç тĕлне урăх нимĕн те лекмерĕ. Иртнине, паллах, аса илес килмест... Йывăр... Паянхи пирки вара савăнсах калаçма пултаратăп. Телейлĕ эпĕ. Аттепе аннене çав тери юрататăп. Маншăн йăлтах тăрăшаççĕ. Хăйсен ăшшине парнеленĕшĕн пысăк тав вĕсене! Çак пурнăçра мĕн пур лайăххине ырă чĕреллĕскерсене сунатăп, – терĕ Маша хавассăн йăл кулса.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Çатракасси.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

## Спортра – сывлăх



Пирĕн шкулта вĕренекенсем спорта юратаççĕ. Çăмăл атлетикăна кăмăллакансем чупаççĕ, хĕлле йĕлтĕрпе ярăнаççĕ. Шашка-шахмат кружокне çӳрекенсем те çитĕнӳсем тăваççĕ.

Эпир те, пĕчĕкскерсем, спортпа туслă. Уроксем умĕн те физзарядка тума май тупатпăр. Тăхтавра та тĕрлĕ хускану тăватпăр. Пирĕн республикăра тĕнче шайĕнче иртнĕ спорт форумне те хаваспах хутшăнса шкулта ăмăрту ирттертĕмĕр. Ун чухне малти вырăна тухаймарăмăр, çапах тулли кăмăлпа савăнтăмăр.

Спорт сывлăхшăн питех те усăллă. Çакна аван ăнланатпăр. Малашне те унпа туслă пуласчĕ.

***Анастасия СЕРГЕЕВА,***
***2 класс.***

Шупашкар районĕ,
Ишекри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул.
**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** эпир паян та тĕрлĕ дистанцие чупса тухма хатĕр.

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

ĂСТАСЕМ

## Шкулти курав



Шупашкарти 10-мĕш шкулта алĕç искусстви чысра. Ачасен пултарулăхĕпе паллаштаракан куравсем иртересси те йăлана кĕнĕ. Çак кунсенче шкулта «Пĕчĕк арча-пуканесем» выставка уçăлчĕ. Технологи вĕрентекен И.С.Бовырина ертсе пынипе 6-мĕш классенче вĕренекен хĕрачасем хатĕрлерĕç ăна. Хĕр пĕрчисем тĕрлĕ функциллĕ пĕчĕк арчасем (шкатулкăсем) ăсталанă: ăпăр-тапăр упрама та пулать, интерьер илемлетме те юрăхлă вĕсем.

Технологи урокĕсенче çамрăк ăстасем «Пир тĕртмелли мелсем тата пусмасен уйрăмлăхĕсем» темăна тăрăшса вĕреннĕ. Кайран вара кашниех «Пĕчĕк арча-пуканесем» проекта пурнăçлама тытăннă. Çак илемлĕ ĕçре вĕсем кирлĕ мар пусма татăкĕсемпе усă курнă. Теттесен вăрттăнлăхне те уçса парар: арчан çÿлти пайĕ – пуканене тытса тăракан никĕс.

Вĕренекенсем хăйсен ĕçĕсемпе питĕ кăмăллă. Капăр та хÿхĕм теттесене ăсталама фантази те, пултарулăх та кирлĕ, унсăрăн тĕв тытнине пурнăçа кĕртме кансĕр.

*Ирина БОВЫРИНА,*
*вĕрентекен,*

Шупашкар, 10-мĕш шкул.
**Автор сăнÿкерчĕкĕсем.**



ÇЫРĂНТАРУ – 2015

Хисеплĕ Вулаканăмăр!

Эс пĕлен: «Хыпар» Издательство çурчĕн кунçулĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Вăхăт пире çĕнĕлле пурăнма, çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Эпир сан шанчăкна тÿрре кăларма тăрăшăпăр, эс вара пирĕн кăларăмсене, тархасшăн, çырăнсам.

«Хыпар»: Вулаканăм, пĕр çулла утар!

| Кăларăмсем | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 732,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăматкун | 78353 | 304,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 358,08 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 325,08 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 205,02 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 184,04 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 376,62 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 184,08 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | 24608 | 185,04 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Тантăш | 54802 | 274,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |


•ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

### Шăрпăк вăйă мар, унпа ан выля!

Вут-кăварпа ялан асăрханулă пулмалла, унсăрăн инкек тухасса кĕтсех тăр.

Вутăн чĕлхи вăрăм, вăл кĕске самантрах кил-çуртран кĕл хăварма пултарать. Капашсăр пысăк инкек çыннăн чун-чĕрине ĕмĕрлĕхех амантать. Ун пек ан пултăр тесе шкул ачисемпе тăтăшах тĕрлĕ калаçу, мероприяти ирттереççĕ Пăлапуç Пашьелсем. Çакăн çинчен линейкăра çеç калаçмаççĕ, класс сехечĕсене те вут-кăварпа асăрханулăх пулмаллине халалласçĕ. Нумаях пулмасть улттăмĕш класра вĕренекенсем хăйсен ертÿçипе «Пушар хăрушсăрлăхĕ» темăпа калаçрĕç. Вут-кăвар алхасасси, пушар тухасси мĕнрен пуçланать-ха? Чылай чухне пирĕнтен чылайăшĕ ансат правилăсене пĕлменнинчен килет. Çакна çирĕплетсех каларĕç ачасем. Аслисен тимсĕрлĕхне пула та пушар кил-çурта, хуралтăсене тĕп тăвать. Калаçу дискусси евĕр иртрĕ. Кашни ача хутшăнчĕ тавлашăва. Ăнсăртран тухнă пушарпа епле кĕрешмелле-ши тата? Çакăн пирки сăмах хускатрĕç вĕренекенсем. Аллă виçĕ çул каялла Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси шкулĕнчи пушарта çĕр ытла ача çунса вилнине те хурланса аса илчĕç. Пушар ан тухтăр тесен пирĕнтен кашни асăрханулă пулмаллине тепĕр хутчен палăртрĕç.

### Асăрханăр: çÿхе пăр

Нина Валентиновна Тихонова ертсе пыракан саккăрмĕш класра «Асăрханăр: çÿхе пăр!» темăпа калаçу иртрĕ. Ку калаçăва ахальтен пуçарман кунта. Кĕçех хĕл ларма вăхăт çитет. Сивĕсем пĕвесемпе кÿлĕсене çирĕп пăрпа витиччене ача-пăча коньки çине тăрса унта ярăнма васкать. Шăпах çакăн чухне инкек-синкек сиксе тухать те ĕнтĕ. Пăр çÿхине пула ачасем шыва кĕрсе ÿкеççĕ, путаççĕ. Шывсем 10-12 сантиметр хулăнăш пăрпа витĕнмесĕр унта васкама юраманнине тепĕр хутчен аса илтерчĕ Нина Валентиновна. Асăрхаттаракан паллăсем пĕве, кÿлĕ, юхан шыв хĕррине пулмаллине те пĕлтерчĕ. Ăнсăртран сиксе тухнă инкек пирки çийĕнчех кĕсье телефонĕпе те пĕлтерме май пуррине аса илтерчĕ. Вĕренекенсем çакна ялан асра тытма шантарчĕç.

Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.
**(Хыпарсене шкул сайтĕнчен илнĕ).**

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1266 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4345
Пичете ноябрь уйăхĕн 12-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

ШКУЛ ПРОГРАММИНЧЕН

# Тăвансемпе савнă килтен хакли тата мĕн пур-ши?

**(Н.В. Шупуççыннин «Йĕкĕрлĕ курка» сăвви тăрăх)**

Н.В. Шупуççынни (Васильев) – XX ĕмĕр пуçламăшĕнче палăрнă поэтсенчен пĕри. 2014 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 125 çул çитет. Тĕрлĕ çулта чăваш литература тĕпчевçисем – А. Отачкин, Хумма Çеменĕ, Г. Келли, В. Канюков, В. Эзенкин, Г. Юмарт, Ю. Артемьев, В. Родионов Шупуççынни пурнăçĕпе пултарулăхне тĕрлĕ енлĕ пăхса тухса хакланă. Вĕсем çыравçăн пултарулăхне тапхăрсем çине уйăрса пăхни унăн аталану çулне лайăхрах курма парать тенĕ. Тĕслĕхрен, В. Родионов çак шухăша «Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕн чăваш литератури» вĕренӳ кĕнекинче (131 страницăра) çапла уçăмлатать: «Поэт ăçта пуrăннине тата пулнине кура унăн пултарулăхĕн çак тапхăрĕсене палăртмалла: Чĕмпĕр тапхăрĕ; Çĕнĕ Аксу тапхăрĕ; вăрçă тапхăрĕ».

Çак ĕçре Н. Шупуççынни вăрçă тапхăрĕнче çырнă "Йĕкĕрлĕ курка" сăввине пăхса тухас терĕмĕр. Поэт кун-çулĕнчен çакă паллă: 1914 çулта Шупуççыннине империализм вăрçине илсе каяççĕ. Çакăнта салтак шухăш-кăмăлне палăртса темиçе сăвă çырать. Çыравçа вăрçă терчĕ-нуши те, тыл пурнăçĕ те канăçсăрлантарать. Салтакран Шупуççынни 1918 çулта тин таврăнать.

Н. Шупуççыннин «Йĕкĕрлĕ курка» сăвви 1914-1915 çулсенче çырнă. Ку вăхăтра поэт вăрçă çулĕсемпе çӳрет, тăвансемпе çуралнă еншĕн хытах тунсăхлать. Çав тĕп шухăш унăн «Йĕкĕрлĕ курка» сăввинче лайăх сисĕнет. Автор ăна тăватă йĕркеллĕ çаврăмпа çырнă. Сăвă пĕтĕмпе 4 çавраран тăрать. Лирика геройĕ – фронтри салтак. Вăл сăра куркине курсан инçетри тăвансене аса илет:

*Йĕкĕрлĕ курка – сар курка,*
*Хĕррипе тан пыл сăра.*
*Ĕçес килсе ăш çунать,*
*Кам ĕçмешкĕн тав тăвать?*

Сĕтел çинче ларакан тулли куркана илсе никам та ăна ĕçме сĕнмест иккен. Ют вырăнта пурте юрă:

*Курка курнать – хамăр мар,*
*Аллăм çитет – ирĕк мар.*
*Йĕри-тавра ют сынсем,*
*Ăçта-ши ман тăвансем?*

Канăçне çухатнă лирика геройĕ хыпăнса пăшăрханать:

*Курка ларать – сăйламасть,*
*Хĕвел пăхать – ăшăтмасть,*
*Вĕрет хаяр сивĕ çил,*
*Ăçта-ши ман савнă кил?*

*Пыл сăрана тутанма*
*Мăшăр-мăшăр лармалла.*
*Ман мăшăрăм мĕнле-ши?*
*Унăн ĕçес килет-ши?*

«Йĕкĕрлĕ курка» сăвăра тăван кил, тăван ен, çывăх çынсен сумĕпе хакне уçса парать, вĕсен пĕлтерĕшĕ аякра чухне татах та ӳснине палăртать.

Çыравçăн кăмăл-туйăмĕ тата сăввăн тĕп шухăшĕ икĕ сăнар – йĕкĕрлĕ курка тата лирика геройĕ – вăрçăри салтак – çыхăнăвĕнче палăраççĕ. Хайлавра малтан пуçласа вĕçне çитиччен лирика геройĕн кăмăл-туйăмĕ улшăнса пынине ӳкернĕ. Сăвăри лирика геройĕ йĕкĕрлĕ куркапа, сарă куркапа калаçса хăй туйăмне уçса парать. Куркапа калаçнă май вăл хăйне канăç паман ыйтусене хускатать.

Сăвăри йĕкĕрлĕ куркана, икĕ аврлă е икĕ хăлхаллă хăна куркине, автор пĕрре тӳрĕ пĕлтерĕшпе сăра ĕçмелли хатĕр пек, тепре çын мăшăрланса, тăвансемпе пĕрле килĕштерсе, тулли пурнăçпа пурăннине палăртакан символ пек кăтартнă.

Н. Шупуççынни «Йĕкĕрлĕ курка» сăвва калаçу мелĕпе хайласа, риторикăллă ыйтусемпе ăста курса лирика геройĕн, вăрçăри салтакăн, чун тăрăмне кăтартма пултарнă.

«Йĕкĕрлĕ курка» сăвăра тăван кил, çывăх тăвансем, пурнăç çинчен каланисем пире те тарăн шухăша яраççĕ.

***Юлия АНИСИМОВА,***
***чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ.***

Шупашкар,
А.Г. Николаев ячĕллĕ 10-мĕш шкул.

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# «Эпир сахаллăн, анчах тельняшкăпа»



**«Эпир сахаллăн, анчах тельняшкăпа», – теççĕ хăшĕ-пĕрисем пĕчĕк йышпах курăмлă ĕç тума пултарасса шантарса. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш шкулĕнче вĕренекенсем те çапла калассăнах туйăнать. Пĕлӳ çурчĕ пĕчĕкех те мар пек. Илемĕ те хăйне евĕр. Çак шкул хупăнма пултарасса ниепле те ĕненес килмест.**

Ача шучĕ çулсерен сахалланса пыни вĕрентекенсене питех те пăшăрхантарать. Ку шкулта пурĕ вăтăра яхăн ача çеç. Апла пулсан та вĕсем пур çĕрте те хастар, маттур, пултаруллă. «Тантăш» хаçатпа, «Тетте», «Самант» журналсемпе тахçанах туслăскерсем паян та юратнă кăларăмĕсемпе тачă çыхăну тытаççĕ.

Штанаш шкулĕнче хăнара пулнă май хаçатăн çамрăк корреспонденчĕсемпе Алеша Яшмейкинпа, Стасик Манинпа, Диана Майоровăпа, Таня Устиновăпа тата ыттисемпе те паллашрăмăр. Акăлчан чĕлхине вĕрентекен Галина Вячеславовна Зотовăпа чăваш чĕлхине вĕрентекен Сергей Борисович Майоров пире ăшшăн кĕтсе илчĕç. Галина Вячеславовна – темиçе кĕнеке авторĕ. Калавсем, юмахсем çыраканскер çак ĕçре çитĕнӳ чылай тунă. Халĕ ачасене те ку ăсталăха явăçтарать. Çамрăксенче çырас туртăма аталантарма, литературăна юратма вĕрентет вăл. Галина Вячеславовнăн вĕренекенĕсенчен пĕри, пирĕн хастар автор – Алеша Яшмейкин. Унăн хайлавĕсем хаçатра тăтăшах пичетленнине вулакансем асăрханă ĕнтĕ. «Тантăш» страницисенче хăйĕн пултарулăхне курсан кашнинчех хавхаланать çамрăк автор.

– Хамăн хайлавсене хаçатра курсан питĕ савăнатăп, нумайрах çырас кăмăл çуралать, – тет Алеша. – Çывăх вăхăтра тата темиçе сăвă ярса парас шухăшлă-ха эпĕ.

Юратнă хаçатне ăна амăшĕ çырăнса парать. Ара, унта интереслĕ статьясем, вуласа пĕлмелли нумай-çке.

– Эпĕ «Тантăша» хам та кăсăкланса вулатăп, – тет Алешăн амăшĕ Тамара Ивановна кăмăллăн. – Ывăлăн хайлавĕсене курсан вара пушшех хĕпĕртетĕп.

Çак кун Илья Степанович Клочков паллă фотокорреспондент та тĕлпулăва килчĕ. Вăл сăн ӳкерме юратакансене çак ăсталăхăн вăрттăнлăхĕсене уçса пачĕ.

– Енчен эсир фотоăста пулма ĕмĕтленетĕр тĕк çак правилăсене пăхăнăр, – терĕ вăл. – Чи кирли – хуть те ăçта каятăр пулсан та яланах пĕрле фотоаппарат илĕр.

Ачасем ăна тимлĕн итлерĕç, ыйтусем парса кăсăкланчĕç.

«Хыпар» Издательство çурчĕ иртгернĕ «Çамрăк корреспондентсен слетне» килсе кайнине вара хавхаланса аса илеççĕ «Тантăш» тусĕсем. Вĕсем малашне те юратнă кăларăмĕсене çырăнса илме, унта тăтăшах çыру çырма сăмах пачĕç.

***Нина ЦАРЫГИНА.***
**Илья КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕ.**

# Маттурсем!



## «Шкула çӳремесĕр пурăнма пулмасть»

Вĕренӳ çынна мĕн тери кирлине Никита Петров, иккĕмĕш класа çеç çӳрет пулин те, аван ăнланать. Шкула сукмак такăрлатасса мĕнле чăтăмсăр кĕтнине манаймасть вăл. Çав кун çитсен вара унран телейли те çукчĕ пуль. Çанталăкĕ çумăрлă пулни те чунĕнчи хаваслăха сӳнтереймен. Надежда Николаевна вĕрентекен пулăшнипе пĕлӳ тĕнчине кĕме пуçланă вăл.

– Шкула çӳремесĕр пурăнма пулмасть, – шухăшлăн калаçать арçын ача. – Унсăрăн эпир ăçта мĕн çырнине те вулаймастпăр вĕт, вара çухалсах каятпăр. Хушса кăларма та пĕлмелле пирĕн...

Хăш чухне Никита çул хĕрринче хура тата шурă йăрăмлă патаккипе сулкалашса тăракан пиччесене курать те вĕсене ăмсанса сăнама тытăнать. Эх, унăн та ӳссе çитсен полици ĕçченĕ пулас килет-çке. Çул-йĕр правилисене аван пĕлет вăл. Эппин, ĕмĕчĕ пурнăçланас шанăç пысăк.

Алла хутпа кăранташ лексен вара арçын ача темĕн те пĕр ӳкерме тытăнать: пӳртсем, машинăсем, чечексем... Сăмах май, чечексене вăл питĕ юратать, илемĕпе киленет, типесрен шăварсах тăрать. Кĕлчечек, шăнкăрав курăкĕ, хĕвелçаврăнăш вара уйрăмах килĕшеççĕ. Амăшĕпе пĕрле чечек пахчинче кĕштĕртетме питĕ кăмăллать.

Никита сăвă та çырать. Пĕтĕмпех сăнама юратакансккере çынсем хăйсене епле тытни канăç памасть, çавăнпа вăл хăйĕн шухăшĕсене çапла палăртать. Сăвви илемлĕрех пултăр тесе вара пиччĕшĕ Анатолий пулăшать.

## Ырă чунлă Арина



Арина Красновăн килĕнчи пĕр кĕтесĕ уйрăмах илемлĕ. Мĕншĕн тесен ӳкерме юратакан хĕр ача унта хăйĕн ĕçĕсене вырнаçтарнă. Вĕсенче темĕн те курса киленме пулать: пӳртсем те, чечексем те, çынсем те... Хĕр ача ӳнерçĕ пулма ĕмĕтленет. Çывăх çыннисене, юлташĕсене, вĕрентекенсене мĕн те пулин ӳкерсе парнелеме кăмăллать. Тепĕр çынна савăнăç кӳнинчен аванраххи мĕн пултăр ĕнтĕ?

Вуннăмĕш класра вĕренекен аппăшĕ Алина хитре юрлать, концертсене тăтăшах хутшăнать. Унран сакăр çул кĕçĕн йăмăкĕ те çак енĕпе пултарăллă, сасси илемлĕ.

– Эпĕ сăвă та çыратăп. Шупашкар çинчен хайланисем нумай манăн, – тет Арина кăмăллăн йăл кулса.

Маттур хĕр ача пулăсемпе чечексене пăхса киленме юратать, çут çанталăка сăтăр тăвакансене вара сивлет. Ырă чунлăхĕ хăйĕнчен пысăкрах çав. Аслисем те Аринăран тĕслĕх илессе шанас килет.

## «Асфальт çул сарасчĕ...»



– Ӳссе çитсен эпĕ асфальт саракан пулăп, – пĕлтерчĕ пĕрремĕш класри Илья Фомин пĕр иккĕленмесĕр, çирĕппĕн.

Ку шухăш мана кăсăклантарсах ячĕ. Тантăшĕсенчен чылайăшĕ полици ĕçченĕ пулма ĕмĕтленет-çке. Кунта вара урăх тĕллевлĕ ача та пур.

– Пирĕн кил тĕлĕнчен тăтăшах ĕнесем иртсе çӳреççĕ. Йĕпе çанталăкра вĕсене пула çул пăсăлать. Асфальт сарсан ăна аркатаймĕччĕç-ха та... – шухăшне малалла тăсрĕ арçын ача.

Илюш килте виçĕ ачаран чи кĕçĕнни. Аслисем ăна яланах теттесемпе савăнтарма тăрăшаççĕ. Çав çемçе упа çурисемпе терминаторсене пуçтарса лартма вырăн та çук ĕнтĕ. Вĕсемпе выляса йăлăхсанах арçын ача урамаваскать. Унта ăна юлташĕсем кĕтеççĕ, пĕрле пытанмалла тата хăваламалла выляма чĕнеççĕ.

Çапах та вăхăта выляса çеç ирттермест Илюш. Шкултан таврăнсанах ашшĕ патне пырать те ĕç хушасса кĕтет. Хăй нихăçан та ӳркенмест. Вăхăт хăвăрт иртни çеç пăшăрхантарать ăна. Пур ĕçе те пĕр кунта пурнăçласа пĕтерме çук иккен.

– Пирĕн килтен инçе мар пĕве пур. Пĕр вăтăр утăм çеç кирлĕ унта çитме. Вăлтапа пулă тытма çав тери аван. Ăскăчпа ун пекех интереслĕ мар, – каласа парать пĕчĕк пулăç. – Пĕррехинче вăлта йĕппине темĕн йывăрскер çакланчĕ. Пысăк пулă пуль тесе савăнсах кайрăм. Туртатăп-туртатăп – кăлараймастăп. Вăл вара чутах хама сĕтĕрсе каятчĕ. Ондатра пулнă иккен!

Нимĕнле лару-тăрура та аптăраман ачасемпе яланах интереслĕ. Илья малашне те çаврăнăçулăхне çухатмĕ пулĕ тетĕп, килĕ умĕнче асфальт çул та сарĕ-ха.

## Вальăн сассине радиопа илтĕпĕр-ши?



Саккăрмĕшĕнчи Валя Федорова тăваттăмĕш класранпах Çамрăк космонавтсен отрядне çӳрет. Чи хастаррисенчен пĕри вăл. Вĕренӳре «4» тата «5» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пыраканскер тăтăшах тĕрлĕрен конференцире, предмет олимпиадинче çĕнтерет. Чăваш чĕлхипе тата вырăс литературипе, тĕслĕхрен, районта ăна çитекен çук.

Валя шкулти кашни мероприятие хаваслăх кӳрет. Сасси илемлĕ пулнăран тата хăйне тытма пĕлнĕрен ăна час-часах уявсене ертсе пыма шанаççĕ. Унсăр пуçне вăл юрлама та, ташлама та ăста.

Çуркуннене ытларах килĕштерет Валя. Мĕншĕн тесен ун чухне йывăç-курăк чĕрĕлет, тавралăх илемленет. Хĕр ача хăй те шăпах çутçанталăк ешернĕ вăхăтра çут тĕнчене килнĕ. Çавăнпа çуркуннене питĕ юратать вăл. Ун чухне сăвă йĕркисем те пуçа килме тытăнаççĕ. Пĕчĕкрех чухне Валя çутçанталăк çинчен çырма кăмăлланă, халĕ вара асамлă йĕркесене амăшне халаллать.

«Пин пус пуличчен пин тус пултăр», – теççĕ халăхра. Валя та килĕшет çак тарăн шухăшлă сăмахсемпе. Вăл çăмăллăнах юлташ тупаять, пуплеме юрататать, уçă чунлă пулнăран ăна çынсемпе хутшăнма йывăр мар. Хăйĕн ĕмĕт-тĕллевне те палăртса хунă.

– Манăн журналист пулас килет, – тет Валя. – Тĕрлĕ çынпа калаçас, нумай курса çӳрес, ытларах пĕлес килет.

Чуна çывăх ĕçе пурнăçлама та кăмăллă пулĕччĕ. Тен, темиçе çултан Валя Федоровăн сассине радиопа илтсе киленĕпĕр?

## Илеме асăрхакан Лена



Кĕçĕннисене курсанах Лена Федоровăн чунĕнче йăвашлăх вăранать. Вĕсемпе ытларах та ытларах калаçас, ĕмĕт-шухăшне ыйтса пĕлес, вĕсене ырра вĕрентес килет... Тен, ахальтен çапла туртăм çуралман пулĕ Ленăн. Вăл вĕрентекен пулас тĕллевпе пурăнать-çке, кĕçĕн классене çырма-вулама хăнăхтарасшăн.

Вĕренӳре малта ĕлкĕрсе пыракан хĕрача районти чăваш чĕлхи олимпиадинче те çĕнтернĕ. Яланах нумай пĕлме ăнтăлать вăл, ку вара çитĕнӳ тума самай пулăшать.

Тĕрĕ е ӳкерчĕк конкурсĕсенче те Лена час-часах палăрать. Пĕлтĕр Вăрнарти ăмăртура çĕнтернĕ. Тавралăха сăнасси ăна питĕ илĕртет çав. Кашни япаларах ыррине асăрхама вĕренмелле пирĕн. Ӳкерекен çакна курать кăна мар, чĕрипе те туять.

Кĕçĕннисен тĕнчи вара хитре. Çав илемлĕхе пĕтме парас марччĕ.

Вăрнар районĕ,
Мăн Явăш шкулĕ.

Страницăна Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

Тантăш 5
46 №, 2014, ноябрь, 13

# Çын ташласан – ташла, Çын юрласан – юрла...

Сăмала Ванюкĕ юлашки вăхăтра тарăхтаракан пулчĕ. Ытла чее вăл. Сăртран чиперех иксĕмĕр çунашкапа ярăнса анатпăр. Çырма тĕпне çитсен хайхискер сӳрĕккĕн:

– Лисук, хăвах туртса хăпар-ха çунана, хама япăх туятăп. Ура та туртать пек, – тет уксахласа.

Çавăн пек пилĕк хутчен хăтланчĕ. Юлашкинчен чăтаймарăм:

– Çитет манран кулма! Урăх ярăнтармастăп сана! – тесе тепĕр вырăна ярăнма васкарăм.

Эх, мĕн тери лайăх! Никам та кансĕрлемест, никама та тарăхмастăн. Акă ман пата каллех Ванюк вашкăртса çитрĕ.

– Лисук, урăх апла хăтланмăп. Атя, малашне те паянхи пек туслă пурăнар. Пĕрлех çунашкапа ярăнар, – тилмĕрчĕ хайхискер.

Ĕнентĕм. Каллех сăртран çырманалла васкарăмăр. Эккей, ку хутĕнче те улталарĕ Ванюк! Çуна туртса хăпармарĕ.

– Иван ывăннă,
Сак хушшине хĕсĕннĕ,
Тараканне утланнă,
Хăнкăлине çавăтнă,
Эрешменне хăвалать, – янăрашрăм ыттисем те илтмелле.

Арçын ача палан пек хĕрелчĕ.

– Лисук, аплах ан йĕкĕлтеш-ха. Çын умĕнче аван мар, – терĕ чĕтренсе тухакан сассипе. – Анне-атте ячĕпе калатăп, урăх ĕмĕрне те хам сăмаха çилпе вĕçтерместĕп.

Пĕлетĕр-и, Ванюка вырăна лартрăм! Халĕ унран лайăх ача çук. Мана кашни ир пылпа çăкăр çитерет, тепĕр чух пылак çимĕçпе те хăналать. Паян вара сарă мăйăр та çитерчĕ.



Çын ташласан – ташла,
Çын юрласан – юрла,
Çын ĕçлесен – ĕçле,
Çын савăнсан – савăн.



Курак патне кайрăм та,
Курман яшка çитерчĕ, –
Ыран каллех каяр пуль!



Утьăкка! Утьăкка!
Утă капан айĕнче
Пĕри путек тунă тет,
Путекки тухса тарнă тет.

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

**ХАЛАП ХАПХА ТĂРРИНЧЕ**

## Çĕр сум пуличчен çĕр тус пултăр

Çыннăн миххи-миххипех укçа пулсан та çав пуянлăх ăна пулăшас çук. Пурăннă тет пĕр пĕчĕк ялти пысăк пӳртре пĕччен çын Микулай. Унăн тус-юлташ пулман. Вăл пĕр ялта пурăнакан çынсемпе ятлаçса та вăрçса çеç пурăннă. Укçи вара ниçта чикейми нумай пулнă. Вăл пахчара ĕçлеме юратман. Пĕтĕм апат-çимĕçне лавккаран туяннă.

Çак ялтах чухăн Васлей пурăннă. Ун укçи те, çын умне тухмалăх çи-пуçĕ те пулман. Çиме çăкăрĕ те аран-аран çитсе пынă. Анчах та вăл питĕ ырă кăмăллă çын. Тус-юлташĕсем ун патне килсех тăнă. Йывăр вăхăтсенче пыра-пыра пулăшнă. Вĕсем пур ĕçе пĕрле тума тăрăшнă.

Акă пĕррехинче Микулан пысăк инкек сиксе тухать. Каçхине кĕтмен çĕртен кĕлетне вут хыпса илет. Çакна кӳреннĕ кӳршĕ Максăм асăрхасан та никама систермест. Микула вăл вăхăтра пӳртре телевизор пăхса ларнă. Пуян çын чӳрече патне пырсанах хĕрлĕ çутă мĕлтлетнине асăрхать. Çийĕнчех урама вирхĕнет. Пĕччене пушара сӳнтерме хăтланать. Анчах вут чĕлхи пӳрт çине те куçать. Микула патне пĕр çын та пулăшма килмест. Çапла унăн пӳрчĕ тата мĕнпур пурлăхĕ çунса каять.

«Çĕр сум пуличчен çĕр тус пултăр», – теççĕ ваттисем. Çак Микулан укçи ним те туса пулăшаймарĕ. Этеме пурăннă чух тем çитмест, вăл пĕринпе харкашать, теприне кӳрентерет. Укçа чылайăшне кура çынна паллами пулать. Тус-юлташне те хăйĕнчен сивĕтет. Ара, çывăх çын юнашар пулсан пурăнма та çăмăлрах-çке.

*Наташа ПЕТРОВА, 10 класс.*

## Мулкачне тытмасăр тирне ан сӳ

Пĕр арçын уйра утса пынă. Сасартăк вăл мулкача курнă та шухăша путнă...

– Тытатăп та çак мулкач ашне пĕçерсе çиетĕп. Тирне сутса сысна çури туянăп. Вăл çитĕнĕ те икĕ çура çăварлĕ. Вĕсене пусса какайлă пулăп. Пĕр ампар тулли аш сутса укçа тăвăп. Унтан чаплăран та чаплă çĕнĕ çурт туса лартăп. Эх... Пурнăç пусланать тинех вара! – ĕмĕтленсе пырать хайхискер.

– Ну... Вăйлă пулать-çке! – ĕмĕтри çурчĕ куçĕ умне тухнипе кăшкăрса янă савăннăскер. Мулкач çын сассине илтнĕ те хăранипе тарнă.

Ахальтен каламан çав «Мулкачне тытмасăр тирне ан сӳ», – тесе.

*Марина КОНСТАНТИНОВА, 11 класс.*

Çĕмĕрле районĕ,
Юманай шкулĕ.

# "Тантăш" тусĕсем

## Чунĕ ырă, алли ăста

Улттăмĕш класра вĕренекен Валерия Александринăн чунне вĕтĕ шăрçапа ĕçлесси тыткăнланă. Вăл çак ĕçпе иккĕмĕш класранпах кăсăкланать. Малтан хăй тĕллĕн тăрмашнă, каярах амăшĕпе пĕрле тем те пĕр ăсталама пуçланă. Халĕ районти тата ялти тĕрлĕ куравра, уявра хăйсен пултарулăхĕпе ыттисене тĕлĕнтереççĕ. Çинçе пралук çине тĕрлĕ тĕслĕ вĕтĕ шăрçа тирсе тунă япаласем куçа чăнах та илĕртеççĕ. Хăйне евĕр йывăççемпе чечексем асамлăн йăлтăртатнине вара тахçанччен пăхса тăма пулать. Юмах тĕнчинчи сăнарсем пекех туйăнаççĕ вĕсем. Унти тĕлĕнтермĕш, этем чĕлхипе калаçакан йывăççемпе чечексем шăп çакăн пек пулнă ахăртнех.

– Пĕр чечеке пĕр кун хушшинче ăсталама май пур. Йывăççене вара аннепе иксĕмĕр виçĕ-тăватă кун хатĕрлетпĕр, – каласа парать Валерия. – Алă ĕçĕпе ытларах хĕлле аппаланатпăр, мĕншĕн тесен çулла ялта пушă вăхăт сахалтарах-çке. Ĕç нумай.

Килти пӳлĕмсене те Валерия хăй аллипе ăсталанă япаласемпе капăрлатнă. Зал варринче кĕлчечексем, стена çумĕнче карçинккара çеçексем çакăнса тăраççĕ, пĕчĕк сĕтел çинче вара йывăççем лараççĕ. Вĕсем симĕс шăрçаран пулнипе чăн-чăн симĕс кĕтес пекех курăнаççĕ. Пӳрт-çурта хăйне евĕр илем кӳреççĕ. Хăнасем вара çав япаласенчен пĕрне те пулин тытса пăхмасăр чăтаймаççĕ.

Вĕтĕ шăрçапа ĕçлес ăсталăха Валерия Шупашкарти санаторире пурăннă чухне алла илнĕ. Кайран та ăна, çĕнĕ çемьене усрава пурăнма илсе килсен те, хăйĕн юратнă киленĕçĕпе тăрмашма пăрахман. Унччен пурнăçĕ пирки питех калаçма юратмасть Валерия. Халĕ вăл пысăк çемьере, чун ăшшине, юратăва туйса çитĕнет. Çакăнтан пахи вара нимĕн те çук. Амăшĕпе ашшĕне хĕрача питĕ хисеплет, çавăнпа та вĕсемпе «эсир» тесе калаçать.



– Вăхăт иртсен, тен, анне-аттепе «эсĕ» тесе пуплеме пултарăп пуль. Хальлĕхе апла теейместĕпха, шалти туйăм çапла тума хистет, – тет сăпайлăскер кăмăллăн.

Валерия çак шкулта виççĕмĕш çул вĕренет ĕнтĕ. Халĕччен юлташ та чылай тупнă. Малтанхи вăхăтри пек пĕччен тунсăхласа лармасть вăл. Тусĕсемпе урамра выляса савăнать.

Пултарулăхĕпе тĕлĕнтерекен хĕр пĕрчи ӳкерме те ăста. Çынсене, пирĕштисене, юмахри сăнарсене чĕрĕ пекех сăнлать вăл шурă хут çине. Улттăри йăмăкĕ Яна та унран юласшăн мар иккен. Аппăшĕ кăранташпа альбом туртса кăларсанах юнашар вырнаçса ларать те хăйне валли те ĕç хатĕрĕсем ыйтать. Вăл та ӳкерме кăмăллать. Пĕр-пĕр сăнар пулсах пĕтмесен аппăшĕнчен вĕрентме хистет. Валерия вара пĕчĕкскере пуçĕнчен шăлса илет те еплерех ӳкермеллине кăтартса парать. Эх, хĕпĕртет Яна! Пуканенни пек аллисемпе хаваслăн алă çупать.

– Питĕ илемлĕ ӳкерет Яна, – мухтать йăмăкне Валерия. – Эпĕ унпа ларма кăмăллатăп, вăл яланах мĕн те пулин интересли шухăшласа кăларать.

Пурнăç хура тата шурă йĕрсенчен тăрать вĕт-ха. Хăш чухне ним çук çĕртенех кичем пулса каять. Ун пек чухне вара Валерия пусăрăнчăк кăмăл-туйăма çĕклемешкĕн йăмăкĕпе вылять е хăйне килĕшекен юрă-кĕвĕ итлет.

Ăста алăллă хĕрача çитĕнсен кил-çурта илемлетекен пуласшăн. Килĕшӳллĕ сĕтел-пукан, тĕссем суйласа кашни çурта хăтлăхпа илемлĕх кӳресшĕн вăл. Çутă ĕмĕчĕ пурнăçланасса Валерия чунтан шанать.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Комсомольски районĕ,
Кĕçĕн Çĕрпӳел шкулĕ.

## Пирĕн Юля



Пултаруллă чăваш ачисем Пушкăртстанра та сахал мар. Чекмагуш районĕнчи Юмаш ялĕнчи вăтам шкул маттур та хастар ача нумаййипе палăрать. Вăл – районти пĕртен-пĕр чăваш шкулĕ. Унта ачасем виçĕ чăваш тата ултă тутар ялĕсенчен çӳреççĕ. Кашниех хăйĕн тăван чĕлхипе пĕлӳ илет. Вĕренекенсен пултарулăхне аталантармалли майсем чылай кунта. Тен, çавăнпа лайăх вĕренекен яланах малтисен ретĕнче, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать. Çывăх çынсемпе вĕрентекенсен ятне ярасшăн мар вăл. Пĕлĕвне анлăлатса нумайрах та нумайрах пĕлме ăнтăлать. Шăпах çавăн пек ачасенчен пĕри – вуннăмĕш класра вĕренекен Юля Потапова.

Юля нихăçан та ӳркенсе тăмасть. Вĕрентекен хушнине те, киле панă ĕçе те яваплăх туйса пурнăçлать. Шкулта, районта, республика шайĕнче иртекен кашни конкурса, олимпиадăна хутшăнма тăрăшать. Пушкăрт Республикин кунне халалласа тăван чĕлхепе ирттерекен республика шайĕнчи сочинени конкурсĕнче саккăрмĕш класранпах малти вырăнсене йышăнать. «Тăван ялăм» темăпа çырнă сочинени иккĕмĕш, çемьене халаллани вара пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ. Вырăсла сочинени çырса та Юля пĕрре кăна мар Хисеп хучĕ илнĕ.

Вĕренӳре малта пынипе çеç палăрмасть вăл, пĕрле вĕренекенсемшĕн шанчăклă юлташ та. Кашниех мĕнпе те пулин пулăшма е ырă сăмахпа хавхалантарма пултарать. Класра е шкулта ирттерекен кашни мероприятие хаваспа хутшăнать. Уншăн класс чысĕ те малти вырăнта. Унран ыттисем те тĕслĕх илме тăрăшаççĕ.

***Владимир ВАСИЛЬЕВ.***

ШУХĂШ

## Юратăр, упрăр вĕсене!

Яланхи пекех анне шăнкăравларĕ те мана вĕрентсе калама пуçларĕ.

– Анне, эп пĕчĕк ача мар ĕнтĕ халь, хамах йăлтах пĕлетĕп! – чăтаймасăр хирĕç чĕнтĕм ăна. Вĕчĕрхенипе ытла кӳренмелле те каларăм пуль. Ара, хама вĕрентнине чăтма пултараймастăп-çке эпĕ! Анне шăпланнине сиссен телефона сӳнтертĕм. Пичче ним каламасăр пычĕ те питрен çутăлтарчĕ. Эпĕ, тата тарăхса кайнăскер, телефона ун еннелле ывăтрăм. Çилленнипе тепĕр пӳлĕме телевизор курма кайса лартăм.

Вăхăт иртсен çак пулăм манăçрĕ. Пĕррехинче çывăх юлташ шăнкăравларĕ, хăйĕн амăшĕ вилни çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ вăл йĕрсе куççульне çăта-çăта калаçнипе манăн анне вилнĕ тесе ăнлантăм. Мĕ-ĕ-ĕн? Ан-нн-не! Ман анне!? Алăри телефон урайне ӳкрĕ, эпĕ хытса тăтăм. Хăлхара анчах-анчах анне сасси янратчĕ, куç умĕнче унăн çутă сăн-пичĕ мĕлтлететчĕ, тăратăп пĕр сăмах калаймасăр, пыра тем капланнăн туйăнать. Чунра чăтма çук ырату, шухăшра – анне...

– Турăçăм! Турăçăм, каçар! Ун вырăнне хама илсе кай, анчах аннене каялла тавăр, тархасшăн! Та-авăр, тархасшăн! Мана каçар, мана нушалантар, ухмаха, çапах тавăр, тавăр аннене! – урасем вăйсăрланчĕç, чăтайманнипе кăшкăра пуçларăм.

– Шăплан-ха! Мĕн çухăратăн эс? Анне каланине нимĕн те илтместĕп, – тесе аллине телефон кĕпчекне тытнă пичче кĕрсе тăчĕ.

– Ан-н-не-е! – ăнланмасăр пиччерен телефона туртса илтĕм те пĕтĕм вăйран кăшкăрса ятăм.

– Итлетĕп, ман хĕвелĕм, – унчченхиллех ырă та лăпкă саспа хуравларĕ анне.

– Каçар мана, каçар мана, анне...– куççуль витĕр пăшăлтатрăм эпĕ.

– Ывăлăм, мĕн пулчĕ санпа? Чарăн, чарăн, тархасшăн... – лăплантарчĕ анне.

Пичче телефона туртса илчĕ те ман пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

Хăшĕ çухатнă та пулĕ ăна, хăшĕ пачах та курман. Юратăр хăвăр аннĕрсене, хисеплĕр, упрăр вĕсене!

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***

**• КУЛĂШ КАРТИШĔ**

Вĕрентекен:
– Ачасем, сире музейра мĕн ытларах килĕшрĕ?
– Петрова картлашка çинчен еплерех персе анни!

☺ ☺ ☺

Учительница класран ыйтать:
– Пилĕк хут пиллĕк миçе пулать?
Пурте:
– Çитмĕл!
– Мĕскер эсир, ачасем! Пиллĕке пиллĕк çине хутласан 25... ну 26, тен, 27... чи нумаййи те – 28 пулать пуль. Анчах 70 ниепле те пулма пултараймасть!

☺ ☺ ☺

Икĕ вĕрентекен калаçаççĕ.
– Мĕнле класс лекрĕ-ши мана тулькка! Теоремăна ăнлантаратăп – ăнланмаççĕ. Иккĕмĕш хут каларăм – усси çук. Виççĕмĕш хутĕнче хам та ăнкара пуçларăм ĕнтĕ, вĕсем çавах хăнк та тумаççĕ...

☺ ☺ ☺

Вĕрентекен:
– Халĕ вара Пифагор теоремине çирĕплетсе парăп. Хысалти парттăран:
– Тен, апла тума кирлех те мар. Эпир унăн тĕрĕслĕхĕне пĕрре те иккĕленместпĕр!

☺ ☺ ☺

– Тĕлĕнмелле! Эсĕ хăв çеç мĕн чухлĕ йăнăш тунă килти ĕçре! – тет вĕрентекен Марата.
– Мĕншĕн апла шухăшлатăр? Атте те хутшăннă унта!

☺ ☺ ☺

Вĕрентекен дежурнăя ятлать:
– Каллех доска таса мар, сĕтĕкĕ типĕ, глобус вара, – пӳрнипе тĕллет, – тусанпа витĕннĕ.
– Эсир йăнăшатăр, – хирĕçлет ача. – Шăп çак тĕлте Сахара пушхир вырнаçнă.

***Нина ОСИПОВА хатĕрленĕ.***

● "ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ!"

# Кăкшăмăн вăрăм кун-çулĕ

Ăçтан тата хăçан килсе вырнаçнă-ха чăвашсем Сăрпа Çавал хушшинчи сĕм вăрмана? Историрен эпир çакна пĕлетпĕр: Х ĕмĕр пуçламăшĕнче Атăлăн сулахай çыранĕнче Чулман Атăл (Кама) шывĕнчен кăнтăралла Пăлхар патшалăхĕ чăмăртаннă. XI ĕмĕрелле Пăлхар патшалăхĕнчи халăх йышĕ пысăкланса кайнă, вĕсем Атăл сылтăм çыранне, Кама леш енне куçнă, çурçĕрелле сарăлма тапратнă. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн Сĕве шывĕ тăрăх ун варрине çити ларса тухнă чăвашсем, Атăлăн сулахай çыранĕпе те хăпарнă. XII ĕмĕрте несĕлсем Сĕве шывĕпе унăн юпписем çине çирĕпех ларса тухнă.




Владимир Суздаль кнеç Пăлхара мĕнле çулпа çитсе тухнă-ха? Чи кĕски – Муромран Улатăра тухасси. Владимир кнеçĕсем (тепĕр чух кулсасем) Ока çыранĕпе Атăла çити аннă. Кам кимĕпе шывпа, çураннисем (е лашаллисем) тӳрĕн Сăр çине тухнă. Ку çул пуçламăшне вĕсем Чулхула лартнă, Сăр çинче Кăрмăш хули (1372 çулта) никĕсленнĕ. Çул çаканăн Сăр тăрăх тăвалла Улатăр шывĕ патне çити тăсăлнă.

Пĕр вăхăтрах Сĕве çĕрĕ çинче йышланса пыракан халăх çĕнĕ çĕрсем шыранă, Енĕш тăрăх куçса ларнă, Кăкшăм шывĕ тăрăх Шупашкар шывĕ çине тухнă. XIII ĕмĕр пуçламăшĕнче çакăнта шыв-пус-карти (Шупашкар) никĕсленнĕ.

1396 çулта Чулман Атăл варрине аннă вырăссем пăлхар-чăвашсем пурăнакан кашни кĕтесе тĕрĕсленĕ, туприне çаратнă, хирĕç тăракана вĕлернĕ, хуласене (çав шутрах Аслă Пăлхара та) ишĕлтернĕ, ялсене çунтарнă.

Висĕ уйăха яхăн ашкăннă вĕсем кунта. Шут тытнă: çак тăкаклă похода тек иртетерес мар, чĕрĕ пек юлнă халăха Сăр тăрăхне (Чулхула çывăхне) хăваласа каяс. Каланă – тунă.

Сăр леш енне каçсан Кăрмăшалла антарнă. Тыткăнçăсен пĕр пайне Пьяна шывĕ тăрăх лартнă. Кăрмăш хули патне çитсен тыткăнçăсен тепĕр пайне Сăр шывĕн сулахай çыранне куçарнă, вĕсене Выла, Хирлеп, Çавал шывĕсем хĕррине вырнаçтарнă. Вĕсем – Шăмат, Элĕк салисем.

1468 çулта вырăссем каллех Хусан çине Атăлпа Чулман Атăл тăрăх çарсем янă, виççĕмĕш çарĕ Муромран тӳрĕ пырса Атăл çине тухнă, вара Хусан патнелле хăпарнă, тутар мăшкăлĕ пулса пушă лавпа Углич хулине çити тарнă.

Углич, ун чухнехи çурçĕрти çĕрсен шĕкĕр хули, апат-çимĕçрен пуян пулман. Тарнă вырăссене хăваласа çак хулана çитнĕ тутарсем хĕл лариччен унтан никама та кăларман. Шăл шаккаса ларнипе тутă пулаймăн. Тутарсем Хусаналла кайсан Мускавран хушу пынă: унти çар выçă вилес мар тет пулсан «çармăссене» (çул кĕнекинче чăвашсене çапла каланă) çаратма кайтăр.

Выçă вырăссем çĕршер лавпа шăнса ларнă Атăл тăрăх похода тухнă. Пырса çитсен тĕрлĕ енчен çаратса тустарма пуçланă вĕсем чăвашсене. Шупашкар патĕнче юлнисем ун таврашне лăсканă. Çавал е Энĕш варрисене аннисем çав шывсем тăрăх кайнă. «Усал хыпар утпа çӳрет», – тенĕ халăхра. Вырăссем тапăнни çинчен питĕ хăвăрт илтнĕ чăвашсем. Шартлама хĕле пăхмасăр, кил-çурта пăрахса, май килнĕ пурлăха тиесе, выльăхсене хăваласа анăç е кăнтăр енчи вăрмансене тарнă халăх. Çав тапăну вăхăтĕнче Сăр тăрăхне Энĕш çинчен Чурашпа Хучаш, Шупашкар патĕнчи Сăкăт çинчен Сăкăт (халĕ Палтай), Кăкшăм шывĕ çинчен Кăкшăм, Çавал çинчен Байбахтино, Чутай (хальхи Çуткасси, вăл çичĕ яла саланнă).

Ваттисем аса илнĕ тăрăх, Кăкшăм ялĕ малтан Выла хĕррине вырнаçнă. Кăна Бараниха çывăхĕнче асфальт çул сарнă чух экскаваторсем нумай çын шăммине чавалаĸа кăларни те кăтартать. (Чăвашсем хăйсен çăвисене ялăн хĕвел анăç енне тунă). Выла хĕрринче час-часах тĕтре тăнăран тырă пулман пирки Кăкшăм ялĕ çӳлелле хăпарса Байбахтино ялĕ çумне килсе вырнаçнă (хальхи Шоссе урамĕ вырăнне). Байбахтино – хальхи Чапаев урамĕ вырăнĕнче.

Çапла куçса ларнă ялсем çулсем иртнĕçемĕн пысăкланса, аталанса пынă. Вăрман хăртса тунă çĕрсем тыр-пул туса илме çителĕксĕр пулнă. Ялсенчен хăш-пĕр йăхсем уйрăлса тухса, çĕрсене вăрмантан тасатса хăйсене валли йăва çавăрнă. XVII-XVIII ĕмĕрсенче – Карикасси, Аптăшкасси, Пителе, Пăчанар, Кăкшăм ялĕнчен XVII ĕмĕрте – Юманлăх, XIX ĕмĕрте – Выçăлкă ялĕсем.

Малтанах пирĕн тăрăха Байбахтино ялĕ çитсе ларнă. Мĕншĕн тесен архивсенче çак асăннă ялсем Байбахтино обществине кĕни паллă. Анчах та Кăкшăм хăвăртрах аталанса, сарăлса пынăран Байбахтино ялĕпе пĕрлешсе кайнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче, октябрьти революци хыççăн, ку ялсене пуçлăхсем пĕр ял – Кăкшăм – ячĕпе çырма пуçланă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Выçăлкă ялĕ Пителе шутне кĕнĕ, XX ĕмĕр çурринче Пителе ялне хут çинче те, сăмахпа та Кăкшăм теме пуçланă.

Юлашки ĕмĕрсенче Байбахтинăна кĕрекен Кăкшăм тата Пителе ялĕсем мĕнле аталанса пынине архивсенчен илнĕ хисепсемпе кăтартма пулать: 1870 çулта Кăкшăмра 71 кил пулнă, Питлере – 12 кил; 1876 çулта Кăкшăмра 86 кил таран шутланнă, Питлере – 69 кил; 1923 çулта Кăкшăмра – 150 кил, Питлере – 100 кил; 2012 çулта Кăкшăмра 204 кил шутланать, 586 çын пурăнать.



## Ял пĕтмест. Вăл аталанать

Кăкшăмсем пурнăçпа тан утма тăрăшнă. Çĕр-шывра пулса иртекен пулăмсенчен юлман: 1909 çулта земство шкулĕ уçăлнă, 1918 çулта Ял советне туса хунă, 1929 çулта колхоз йĕркелесе янă.

Кăкшăмра питĕ пултаруллă та ĕçчен çынсем пурăнни – пĕве-çырма ячĕсенче те палăрать: Палăк кӳлли, Охань кӳлли, Ленка кӳлли. Яла тарăн çырма çурса кĕрет. Вăл малалла ан аталантăр тесе ял çыннисем 1960 çулсенче çырма тăршшĕпех шыва пĕвелесе тухнă. Ку пĕвесене халĕ те тапăлса кайма памаççĕ.

Кăкшăм ялĕ ĕçре чапа тухнă çыннисене манмасть. Хăшĕ-пĕрисене асăнса хăварас килет: Евграфов – инженер-конструктор (шыв айĕнче çӳрекен карапсене тăвакан), Г.Н.Казаков – горком секретарĕ, «Канаш» хаçат редакторĕ, Чувашгизăн тĕп редакторĕ, Чăваш аслă ял хуçалăх шкулĕн ректорĕ, Н.Ф.Федоров – медицина наукисен докторĕ, В.А.Арсентьев – Минск университечĕн профессорĕ, Е.Г.Андреева – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ зоотехникĕ, П.И.Иванов – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ, А.З.Павлова – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, З.В.Лисицына – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ, А.Ф.Виноградова – халăх çут ĕçĕн отличникĕ... Пирĕн ялта писательсем те кун çути курнă: М.Ф.Федоров литературовед, критик, педагог, СССР писателĕсен союзĕн членĕ, Галина Зотова (Александрова) – ЧР писателсен союзĕн членĕ. Орден-медале тивĕçнисене каласа çитерме çук.

Çапла вара Кăкшăм ялĕ 546 çул тултарчĕ. Унăн пуласлăхĕ пур. Вăл çул çинче вырнаçнă. Ялта шкул, Культура çурчĕ, библиотека, ача сачĕ, темиçе магазин пур. Шкулта музей йĕркеленĕ, унăн ĕçне шкул ачисем хастар хутшăнаççĕ. «Заветы Ильича» колхоз ăнăçлă ĕçлет.

*Людмила АЛЕКСАНДРОВА, вĕрентекен.*

Етĕрне районĕ, Кăкшăм шкулĕ.




ЧР прокуратури право хуралĕн, патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле ноябрĕн 17-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 17-мĕшĕччен "Вилĕм ăçта сутнине пĕлтер!" акци йĕркелет. Тĕллев – наркотиксен кăна мар, психоактивлă мĕнпур хутăшăн, çав шутра туртмалли хутăшсен саккунсăр çаврăнăшне пӳлесси.

Акци вăхăтĕнче республика прокуратуринче, ЧР Шалти ĕçсен министерствинче тата Наркотĕрĕслев управленийĕнче шанăç телефонĕсем ĕçлеççĕ, вĕсемпе шăнкăравласа тата электрон почтипе наркотиксемпе ăçта усă курни, ăçта сутни çинчен анонимлă майпа пĕлтерме пулать. Унсăр пуçне ял-хулара çакнашкал пĕлтерӳсене пухмалли ешчĕксем вырнаçтарнă. Калăпăр, Шупашкарта – "Каскад", "МТВ-Центр" суту-илӳ центрĕсенче, "Шупашкар" пасар территорийĕнче, ЧР прокуратурин çуртĕнче, хула администрацийĕнче, Юстици çуртĕнче, Тĕп автовокзалта, "Салют" культура керменĕнче, "Ача-пăча тĕнчи" лавкка патĕнчи пĕлтерӳсен хăми çинче. Çакнашкал ешчĕксем ытти çĕрте те пулĕç, граждансем унта яракан пĕлтерӳсене прокуратура ĕçченĕсем илĕç. Мĕнпур пĕлтерĕве регистрацилĕççĕ, вĕсем тăрăх тĕрĕслев ирттерессине прокуратура органĕсем сăнаса тăрĕç. Республика прокуратури пурне те пĕрлехи инкеке хирĕç çĕкленме чĕнет. Пирĕн ачасен, тăвансен, çывăх çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕ хăрушлăха лекме пултарать-çке – çакна манас марччĕ.

Наркотик сутакан вырăнсем çинчен анонимлă майпа пĕлтермелли телефон тата электрон почтин адресĕ: **8-937-013-93-41, prokur@cap.ru**

Хĕрӳ лини телефонĕсем: **ЧР прокуратури 39-20-12,**
**Наркотĕрĕслев 23-01-00,**
**ЧР Шалти ĕçсен министерствинче 24-16-55.**

Степан МИХАЙЛОВ

# СӲНМИ ЮРАТУ, е ПУХВИРĔН КУЛАС КИЛЕТ

***(3 пайлă, 5 курăнуллă пьеса-юмах)***



**(Малалли. Пуçламăшĕ 42-45-мĕш номерсенче).**

**4-мĕш курăну.**

*Иккĕмĕш курăнури декораци. Илюкпа Савтепи Кашкăр çине утланса кĕреççĕ.*

ИЛЮК. Ну, Кашкăр тус, çакăнта кăштах канар пулĕ. Ку пирĕн паллана вырăн.

КАШКĂР. Юрĕ, эпĕ хирĕç мар.

*Илюкпа Савтепи Кашкăр çинчен анаççĕ.*

САВТЕПИ. Ф-у-у-у! Ларса пырса эпĕ ывăнсах çитрĕм. Хырăм та выçрĕ. Кăштах çиер те выртса канар пулĕ.

КАШКĂР. Эпĕ халех килетĕп. *(Тухса каять, часах Каччă пулса кĕрет).* Унсăрăн Кашкăрăн сăн-сăпачĕпе сирĕнпе апатланма аван мар.

САВТЕПИ. Эпир санран темĕнле сăн-питлĕ пулсан та йĕрĕнместпĕр. *(Карçинккаран çимелли кăларать).* Акă, çиер.

КАЧЧĂ. Нумай çын курнă эпĕ кунта, нумай ырă çын. Анчах Илюк, сан пек ырă кăмăллине курман. Эсĕ мана йывăç хушшинчен кăлартăн кăна мар, хăв выçă пулсан та юлашки апатна та манпа çурмалла çиме кăмăл турăн. Çавăнпа эп сана çак йывăр ĕçре пулăшма шутларăм.

ИЛЮК. Тавтапуç. Эсĕ пулман тăк Савтепипе иксĕмĕрĕн тĕл пуласси пирки шутламалли те çукчĕ.

САВТЕПИ. Те ырра, те усала – куç хупăнсах анать. Ларнă çĕртех çывăратăп.

ИЛЮК. Нумай килтĕмĕр. Пурте ывăннă. Кăштах выртса канар апла пулсан.

*Пурте апат-çимĕçе пуçтараççĕ.*

КАЧЧĂ. Эп ак кунта выртатăп.

САВТЕПИ. Эпир кунта вырнаçăпăр.

*Майлашса выртса пурте çывăрса каяççĕ. Пухвир кĕрет.*

ПУХВИР. Тпру! Ф-фу, ывăнтăм! Миçе эрне, миçе уйăх çапла пĕр вырăнта çаврăнса çӳретĕп ĕнтĕ, хам та пĕлместĕп. Нивушлĕ çапла çӳресех йăванса вилсе кайăп-ши? Пĕтерчĕ ку шуйттан асамçă-Кашкăр! Ха, унта такам пур иккен. *(Тинкерсе).* Ара, ку Илюк мар-и? Çавă. Ак тата Савтепи те кунта. Ку телейлĕ вăхăта ахаль вĕçертес мар-ха. Халь эпĕ сирĕнпе ĕмерлĕхех татăлатăп. *(Кĕсйинчен кăларнă темĕнле курăк тымарне Илюка тата Качча шăршлаттарать).* Ак сире! Эпĕ кăна тахçанах кĕтнĕччĕ-ха. Аран май килчĕ. Халь Савтепи ĕмĕрлĕхе мана юлчĕ. Савтепи, вăран-ха, вăран.

САВТЕПИ. Кăштах çывăрам-ха.

ПУХВИР. Савтепи вăран-ха, килелле каятпăр.

САВТЕПИ *(вăранать те Пухвире палласа илсе).* Тур çырлах! Ăçтан килнĕ эс, Пухвир?

ПУХВИР. Сана шыраса килтĕм.

САВТЕПИ. Илюк, тăр-ха! Пухвир килнĕ!

ПУХВИР. Ан та вăрат вĕсене, пурĕ пĕр тăмаççĕ.

САВТЕПИ. Ах, Турăçăм! Мĕн туса хутăн эс, Эсремет? Мĕн турăн?! Халех тасал ман куç умĕнчен! Чун илли!

ПУХВИР. Мана мĕн кирлĕ, çавна турăм. Итле-ха, Савтепи. Сана эпĕ тупнă. Эпĕ сана Чике-Сухалтан хăтарнă. Эсĕ Илюка курман та. Вăл ăçтине пĕлместĕн те.

САВТЕПИ. Çук! Çук, эсремет! Мана улталаймăн. *(Чупса пырса Илюк çине ӳкет).* Илюк, чунăм! Вăран-ха, вăран! Ах, пĕтрĕмĕр-çке, пĕтĕмĕр-çке! *(Йĕрет).*

ПУХВИР. Енчен Илюка тепре асăнсассăн, сан пуçу та пĕрле çакăнта юлать. *(Савтепине сĕтĕрет).*

САВТЕПИ. Кас! Ман пуç та çакăнта юлтăр! Кас, халех!

ПУХВИР. Чарăн кăшкăрма! Халь эсĕ ман алăра. Мĕн шутлатăп, çапла тăватăп. Анчах сана кунта хăварса ним усси те çук. Хăвăртрах тăр та каяр.

САВТЕПИ. Çук, çук! Эпĕ Илюка хăварса ниçта та каймастăп.

ПУХВИР. Э-эй! Санпа нумай калаçса тăма вăхăт çук. Ирĕккĕн пымастăн пулсан, çыхса пăрахатăп та илсе каятăп. *(Савтепине илсе кайса лаши çине çыхса хурать).*

САВТЕПИ *(пулăшу ыйса).* Илюк! Ах, Илюк! Çăлсамччĕ мана, тархасшăн, Илюк!

*Пухвир Савтепине çыхса хунă лаши çине утланса ларса тухса каять. Савтепин сасси майĕпен çухалать. Мулкачă васкаса кĕрет. Вăл мĕн пулнине тĕмĕ хыçĕнче сăнанă.*

МУЛКАЧĂ. Акă мĕн пулнă кунта! Эпĕ мĕн çухăраççĕ тетĕп. *(Çывăхарах пырса пăхать).* Кăна палламастăп. Ак ку, мана вилĕмрен çăлаканни. Вăл хăтарман пулсан, эпĕ тахçанах ун хырăмĕ витĕр тухмаллаччĕ. Çук, хама ырă тунă пулсан манăн та пăрахса юлас мар. Кусене халех вăратас пулать. Кайса илем-ха чĕрĕлĕх курăкне. *(Каять).*

*Çăхан вĕçсе кĕрет.*

ÇĂХАН. Ка-а-арк! Ха, кунта ман валли апат пур! Карк! Карк! *(Илюк патне пырса куçне сăхасшăн).*

*Мулкачă сиксе кĕрет. Вăл икĕ тĕслĕ курăк йăтнă.*

МУЛКАЧĂ *(Çăхана курса).* Эй-эй! Мĕн тăватăн? Ан тив вĕсене!

ÇĂХАН. Юратнă апата тинех тупрăм. Этем куçĕ!

МУЛКАЧĂ. Кай унтан! Вĕсем ырă чунлă çынсем.Эпĕ вĕсене халех вăрататăп.

ÇĂХАН. Маншăн çавах мар-и? Кирлех пулсан сан куçна та кăларса илетĕп.

МУЛКАЧĂ *(Илюкăн уххине илет те Çăхана тĕллесе).* Итлеместĕн пулсан, эпĕ сана халех персе пăрахатăп.

ÇĂХАН. Карк! Карк! Тархасшăн ан вĕлер! Халех каятăп. Карк! Эпĕ виле çеç шыратăп, чĕррине тивместĕп. *(Вĕçсе каять).*

МУЛКАЧĂ *(Илюка курăкне шăршлаттарса).* Акă пулчĕ те.

ИЛЮК *(майĕпен тăрса ларса).* Фу-у! Нумай çывăрнă пулас.

МУЛКАЧĂ. Эсир ĕмĕрлĕхех çывăрнăччĕ те... Сана акă халь хам вăратрăм. Эсĕ пăх-ха юлташу çине.

ИЛЮК *(Каччă патне пырса пăхса).* Тур çырлах! Вăл чăнах çывăрать. Эй, юлташăм, тăр-ха, тăр!

МУЛКАЧĂ. Кун пек каланипе эсĕ ăна вăратаймастăн.

ИЛЮК. Эсĕ вăра вăратма пултаратăн-ши?

МУЛКАЧĂ. Кирлĕ пулсан вăрататăп.

ИЛЮК. Тархасшăн вăрат. Куншăн сана ахаль тумăпăр.

МУЛКАЧĂ. Халех вăрататăп. Çак курăка кăна шăршлаттармалла... Акă, пулчĕ те!

КАЧЧĂ *(тăрса ларса).* Фу-у! Кайма вăхăт пуль, Илюк.

ИЛЮК. Кайма вăхăт. Анчах ăçта пирĕн Савтепи? Кам пире капла хытă çывăрттарса хăварнă? Нимĕн те ăнланмастăп.

МУЛКАЧĂ. Кунта пĕр юланутлă çын темĕнле хĕре илсе кайрĕ. Вăлах сире те ыйхă курăкĕ шăршлаттарнă...

КАЧЧĂ. Аха, пĕлетĕп, пĕлетĕп!

ИЛЮК. Апла пулсан эпĕ те ăнлантăм. Часрах васкас пулать. Унсăрăн кая юлма пултаратпăр.

КАЧЧĂ. Инçех каяйман-ха. Эпир вĕсене часах хăваласа çитетпĕр.

ИЛЮК. Ну, Мулкачă, тавтапуç сана пире вилĕмрен чĕртнĕшĕн.

МУЛКАЧĂ. Эпĕ хамăн парăма çеç татрăм.

ИЛЮК. Айта пирĕнпе пĕрле. Эпир сана тăван вырăнне хурса пăхса усрăпăр.

МУЛКАЧĂ. Илюк, каятăр пулсан эпĕ хаваслансах пыратăп. Йăлăхтарчĕ мана вăрман тăрăх шикленсе çӳреме.

ИЛЮК. Апла пулсан кайрăмăр. *(Каччă еннелле).* Ну, юлташăм, илсе çитер пире! Вăхăтра çитсен пурне те аван пулĕ. Пирĕн пĕтĕм шанчăк та санра кăна.

КАЧЧĂ. Эп часах! *(Тухса каять те Кашкăр пулса кĕрет).*

МУЛКАЧĂ. Ой-ой-ой!

КАШКĂР. Ан хăра.

ИЛЮК. Вăл сана тивмест.

КАШКĂР. Ларăр майлашса.

*Илюк япалисене хăй аллине илет, Кашкăр çине утланать. Мулкачă та унпа юнашар вырнаçать.*

КАШКĂР. Пулчĕ-и?

ИЛЮК. Ну, кайрăмăр!

**Чаршав.**

**5-мĕш курăну.**

*Пуян Пухвир картишĕ. Илемлĕ сад. Сахар вут çурать. Укахви кĕрет.*

УКАХВИ. Сывă-и, Сахар? Курманни чылай пулать. Мĕнле пурăнатăн?

САХАР. Сывах-ха. Хăв мĕнле чупкалатăн?

УКАХВИ. Манне хăв пĕлетĕн. Пĕчченех пурăнкалатăп. Пурăнма питĕ тунсăх. Савтепи пур чухне ун пек марччĕ. Таçта пĕтрĕç пуль вĕсем. Нихăшĕ те таврăнмарĕ.

САХАР. Сас-хура илтĕнмест-ха...

УКАХВИ. Тен, ăçта та пулин тĕл пулчĕç пуль те çапăçсах вилчĕç пуль?

САХАР. Ăçтан пĕлетĕн. Ун пек те пулĕ. Туслă çынсемех мар.

УКАХВИ. Авланас пулать сан.

САХАР. Хĕр тупаймастăп вĕт-ха. Тахçанах авланасшăн. Никам та килмест.

УКАХВИ. Ара, халь пуйса кайнă та çамрăккине кăна пăхатăн. Пирĕн пек инке-арăма курмастăн та.

САХАР. Эсĕ мĕн? Ку пуянлăх хуçи камне те манса кайрăн-им? Мана çын пурлăхĕ кирлĕ мар. Акă ман мĕн пурри йăлтах хам çинче. Ни пытармалли, ни суймалли çук.

УКАХВИ. Пухвир тупăнмасан ку пурлăх йăлтах сана юлать. Эс хуçа пулатăн.

САХАР. Эс ăсран тухнă е чирленĕ?

УКАХВИ. Пухвир шăмми витĕр халĕччен курăк та шăтнă пуль. Эс çаплах ăна кĕтетĕн. Эх, эп пулсан ку çуртра мĕнлерех пурăнмалла.

*Лаша çурăмĕ урлă Савтепине хунăскер, ăна ӳкесрен хăй Пухвир тытса кĕрет.*

ПУХВИР. Тпру-у-у! Сывă-и, хуçасем? Акă, эпир те çитрĕмĕр!

УКАХВИ *(хăраса каялла чакса).* Ак тата! Пухвир, эсех-и ку? Эпир халь тин çеç сирĕн çинчен калаçса тăраттăмăр.

**(Малалли çитес номерте).**

# Юркка тӳррĕн илсе каять...

Н.НЕКЛЮДОВ

## «Ан хăра, мăнукăм...»

Тĕттĕм каç. Пӳртре тăрпасăр лампа çути аран çеç палăрать. Юркка койка çинче тутлă ыйхăра. Ун çумĕнче ларакан Прокоп мучи вăхăт-вăхăтăн сисчĕвленсе таврари сасăсене тăнлать. Пĕчченешерĕн пени тата çынсем кăшкăрашни илтĕнет урамра. Унтан каллех шăп.

Сасартăк таçта бомба сирпĕнчĕ. Юркка шартах сикрĕ.

– Нимĕçсем... переççĕ... – терĕ те вăл аслашшĕне хул пуççирен тытрĕ.

– Çывăр, Юрочка. Ним те мар ку, ахаль çеç...

Пăшал сасси çине-çинех янăрарĕ.

– Асатте, атя вăрмана тарар, – Юрккан шикленĕвĕ вăйланчĕ.

– Ан хăра, мăнукăм, – лăплантарма тăрăшрĕ ватă. Анчах унăн сассинче иккĕленӳ палăрчĕ. Вăл тăрпасăр лампăна сӳнтерчĕ. Инçех мар ракетăн шурă çути саланчĕ. Пӳртре çутă пулса кайрĕ, кăнтăрлахи пек. Унтан каллех пăч тĕттĕмленчĕ.

Картишре васкаса утнă сасăсем илтĕнчĕç. Çенĕк патĕнче йытă нăйкăшса ячĕ. Такам алăкран хыттăн шаккарĕ. Алăк парăнмарĕ. Мучи шикленме те пуçларĕ.

– Юра, пытан, – мăнукне хул пуççирен силлерĕ вăл.

– Ăçта?

– Кăмакана кĕрсе лар. Манпа мĕн те пулин сиксе тухсан çак хута партизан начальствине пар, – терĕ те мучи арçын ачана хуçлатнă хут татки тыттарчĕ.

– Юрĕ, – аслашшĕ хушнине итлесе кăмакана пытанчĕ Юркка.

Алăк уçăлчĕ те «кĕтмен хăнасем» кĕрсе тăчĕç.

– Мĕншĕн часах уçмарăн? – тарăхса ыйтрĕ ял старости.

– Илтмен. Хăлха вăйсăрланчĕ, – тесе ватă каялла чакрĕ.

– Çутă çут! – кăшкăрчĕ нимĕç, хунарĕпе мучи питне çутатрĕ.

Мучи старостăпа икĕ нимĕçе асăрхарĕ. Пĕри çӳллĕскер, маччана кăшт çеç перĕнмест. Вăл ватă умĕнче тăрать, аллинче – темĕнле хут.

– Мĕнле çемье ку? – ыйтрĕ çӳлли.

– Пĕччене х пурăнатăп.

– Ывăлу ăçта? Кинӳ? Мăнуку?

– Ывăла çара илсе кайрĕç. Мăнук аслă хĕрĕм патĕнче. Кин вара... – мучи пуçĕ чĕтренчĕ, куçĕсем шывланчĕç.

– Пане фельдфебель, – ăнлантарчĕ староста. – Кинне партизансемпе явăçнăшăн... – староста сывлăшра пӳрнипе касмăк (çакнине пĕлтерекен паллă) туса кăтартрĕ.

– Аха... Çакнă... Партизан! – фельдфебель мучие хыттăн тĕртсе ячĕ. – Ватă йытă! Манăн кашни ыйтăва хуравлăн, – чăмăрĕпе вăл старике питĕнчен чышрĕ, лешĕ çакна тӳсеймесĕр стенана пырса çапăнчĕ.

– Мĕншĕн çапатăн? Ватăсене хĕнени ăçта пулнă? – мучи çĕкленчĕ, сăмсинчен юн юхать.

– Ывăлу ăçта? – фельдфебель иккĕмĕш хутчен сулса ячĕ. Старик питне аллипе хупласа ĕлкĕрчĕ-ха. Анчах çак ирсĕр çын ăна чăмăрĕпе пуçĕнчен те çапрĕ.

Юркка пĕтĕмпех илтрĕ. Унăн пур вăйран кăшкăрас, аслашшĕне çăлма чупас, нимĕçе мăйĕнчен тытса пăвас килчĕ.

– Ывăлу ăçта? – тарăхнипе фельдфебель вырăн тупма пĕлмерĕ. Вăл мучие çӳçрен тытрĕ, пуçĕпе урайне çапрĕ те çапрĕ. Унтан йĕксĕксем старикĕн аллисене пăрма тытăнчĕç, тапса пĕтерчĕç.

Мучи йынăшма чарăнчĕ. Алăк чĕриклетрĕ, пурте тухрĕç, пӳрт шăпланчĕ. Юркка чылайччен итлесе выртрĕ, нимĕçсем пытанса вăл курăнасса кĕтнĕн туйăнчĕ ăна. Тепĕр кăштах тăхтасан кăмакаран тухрĕ.

Пӳртре йӳçĕ тĕтĕм тăрать. Урайĕнче выртакан аслашшĕ сывламасть, çăварĕнчен юн юхать. Ăнланчĕ Юркка – пĕчченех юлчĕ вăл халь. Алли-ури çыхланчĕ тейĕн. Ним çинчен те шухăшламарĕ, тек нимĕн те хăрушă мар уншăн. Çулăм вăйланса пырать. Чӳрече кантăкĕсем ванса тăкăнчĕç. Чăтмалла мар пăчă сывлăш арçын ачана пăвма пуçларĕ. Юркка урайне ӳкрĕ те питне аллисемпе хупларĕ. Сасартăк вăл аслашшĕн сăмахĕсене аса илчĕ: «Çак хута партизан начальствине пар». Сада вирхĕнсе тухнă Юркка карта çывăхĕнчи курăк çине тĕшĕрĕлсе анчĕ.

## Партизан

Юркка вăрманпа пырать. Хушăн-хушăн чарăнать те хăлхине сисчĕвлентерет. Пĕр евĕр сасă çеç илтĕнет йĕри-тавра, вăхăт-вăхăтăн вăл вăйланать, унтан шăпланать. Вăрман темĕнле вăрттăнлăх пирки пăшăлтатать тейĕн. Юркка утать те утать. Урисем ывăннă, кĕлетки сурса ыратать. Тинех вăл прачак (вăрманта тӳрĕ йĕрпе касса тунă çул) çине тухрĕ. Çил варкăшĕ пырса çапрĕ, тарланă пите уçăлтарчĕ. Арçын ача сарлака чăрăш çумне тĕршĕнчĕ те шухăша путрĕ... Çак самантра такам Юрккана хулпуççирен тытрĕ:

– Мĕн тăватăн эсĕ кунта? – Арçын ача умне автоматлă çӳллех мар çын тухса тăчĕ.

– Эсир вара кам? Тен, партизан?

– Партизан.

– Эпĕ сирĕн пата кайма тухрăм... – Юркка сăн-пичĕ савăнăçпа çуталчĕ.



## «Асатте çырса ĕлкĕрейменнине хам каласа парăп...»

Бригада командирĕн çĕр пӳртне лагерь дежурнăйĕ кĕчĕ.

– Командир юлташ, пирĕн вăрттăн пай арçын ачана тытса чарчĕ. Вăл тĕп командирпа çеç калаçасшăн, – йăл кулчĕ дежурнăй.

– Арçын ачи ăçтан-ха? – пуçне çĕклерĕ командир.

– Пĕчĕк Кăш ялĕнчен.

– Кунта чĕн.

Çĕр пӳрте Юркка кĕрет. Пĕр кунтах унăн пичĕ епле хухнă, куçĕсем путса кĕнĕ. Вăл тӳрех сывлăх сунчĕ.

– Эпĕ – тĕп командир. Каласа пар... – ăшшăн кулчĕ командир. Юркка ăна аслашшĕ панă хута тыттарчĕ.

– Асатте çырса ĕлкĕрейменнине хам каласа парăп...

– Мĕн пулчĕ-ха унпа?

– Нимĕçсем вĕлерчĕç.

– Акă мĕн, арçын ача, халĕ эсĕ апат çиетĕн те выртса çывăратăн. Ирхине вара пĕтĕмпех калаçăпăр.

## Пĕчĕк Кăш ялĕнчи çапăçу

Пĕчĕк Кăш ялĕ Беловежка шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Нимĕç гарнизонĕ виçĕ ротăран тăрать. Унта станоклă 6 тата 12 пулеметчĕ, 60 автомат пур. Фашистсен пĕр пайĕ ял вĕçĕнчи шкулта вырнаçнă, тепĕр пайĕ вара – ялта, хваттерсенче. Майорăн штабĕпе хваттерĕ – чи хĕрринчи çуртра. Çар хатĕрĕсене упракан склад – ял варринче, ял хуçалăх ампарĕнче. Шкул хыçĕнче, кĕпер çинче пулеметлă хурал тăрать. Складăн пост пур.

Бригада командирĕн шухăшĕ ансат. Тĕттĕм каçхине шурлăх урлă юханшыв патне çитмелле, шкулпа ял хушшинчен тухмалла, хуралçăсене пĕр сассăр пĕтермелле, хĕç-пăшал складне çавăрса илмелле, унтан шкула хупăрламалла та кашни ушкăнне уйрăмшарăн тĕп тумалла. Юркка постсемпе çулăм вырăнĕсем ăçта вырнаçни çинчен паха хыпар илсе çитерчĕçке. Унсăр пуçне вăл юханшыв патне шурлăх урлă илсе çитерекен сукмака та пĕлет. Каçсем питĕ тĕттĕм халĕ. Çак меллĕ самантран лайăхраххине кĕтсе илеймĕн.

Тĕттĕмленсе çитсен партизансем ансăр сукмакпа çула тухрĕç. Малта – бригада командирĕпе Юркка. Чĕлĕм туртма тата калаçма юрамасть.

Вăрман вĕçленчĕ. Бригада шурлăх тĕлне тухрĕ. Ура айĕнче – шыв. Чĕркуççи таран пылчăкпа та утма тиврĕ. Командир Юрккан аллине вĕçертмерĕ.

– Тăхтăр-ха... Ку вырăнта пĕкĕрĕлнĕ хырсем пулмаллаччĕ, – арçын ача малтан сылтăмалла, унтан сулахаялла ыткăнчĕ. Аха, акă вĕсем, икĕ йывăç хушшинче вара пĕчĕк кĕпер пур.

Шурлăх тинех хыçала юлчĕ, умра юханшыв сарăлса выртать. Пĕчĕк Кăш енчен йытă вĕрнине илтсен Юркка савăнсах кайрĕ:

– Лайăх çĕре тухрăмăр, командир юлташ. Палланă çыран. Кунта эпĕ час-часах шыва кĕреттĕм.

Партизансем шăппăн, сас-чӳ кăлармасăр ял патне шума тытăнчĕç. Акă вĕсем урама тухрĕç ĕнтĕ. Юркка штаб вырнаçнă çурта кăтартрĕ. Алăк умĕнче çӳллĕ нимĕç тăрать. Бригада командирĕ Гордей разведчик енне пăхса пуçне сĕлтрĕ. Лешĕ нимĕç патне шуса çитрĕ, унтан сиксе тăчĕ те ăна пăвма тытăнчĕ. Иккĕшĕ те урайне ӳкрĕç. Гордей фашиста кинжалĕпе чиксе вĕлерчĕ. Çакна курнăран Юркка чĕри хыттăн-хыттăн тапма тытăнчĕ.

– Никама та чĕррĕн ан кăларăр! – хушу пачĕ бригада командирĕ.

Юркка партизансене пахчасем витĕр хĕç-пăшал склачĕ патне ертсе кайрĕ. Командир час-часах чарăнса тĕттĕмлĕхе сăнарĕ.

– Акă пĕчĕк кĕлет. Кунта хуралçă тăмалла, – тĕттĕм пӳрт çине кăтартрĕ вăл.

Часах вĕсем ку хуралçăран та хăтăлчĕç. Ялпа шкула хупăрласа илчĕç. Тӳпене ятарлă паллă паракан ракета вĕçсе хăпарчĕ, ял çийĕн симĕс çутине салатрĕ. Çулăм тĕттĕмлĕхе тӳрех сирчĕ. Гранатăсем пĕрин хыççăн тепри сирпĕнме тытăнчĕç, пулеметсемпе автоматсем шатăртаттарчĕç. Чӳречерен тарма хăтланчĕç-ха нимĕçсем, анчах çавăнтах вилĕмне тупрĕç. Пирĕннисем тăшман штабне хăватлă граната ывăтрĕç. Пĕрремĕш отряд командирĕ Остапчик партизансене атакăна кăларчĕ. Анчах тăшман пулемечĕ ăна пурнăçран уйăрчĕ. Çакна курса пирĕннисем тата вăйлăрах пеме тытăнчĕç...

Тăшман гарнизонĕнчен нимĕн те юлмарĕ, тĕп турĕç ăна. Ялтан тухса тарма хăтланакан нимĕçсене те тытрĕç. Тепĕр сехетрен партизансем ялтан тухрĕç. Ансăр каçмапа кайрĕç вĕсем, Пĕчĕк Кăш ялĕн çыннисем те пĕрлех пычĕç. Арçын ачана çак каçра мĕн пулса иртни тарăн шухăша ячĕ...

*Вырăсларан*
*Лариса ПЕТРОВА куçарнă.*

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## «Туслăх» салат

**Салат валли 1 кĕленче консервланă пăрçа, 1 пачка шăратнă сыр, 1-2 хăяр, 2 çăмарта, тĕтĕмленĕ какай (чăх тукмакĕ е пĕççи), майонез тата тăвар илетпĕр.**

Çăмартана савăтра лăкатпăр та çатмара пысăк икерчĕ евĕр ăшалатпăр. Икĕ енĕ те хĕреличчен тытатпăр. Сивĕнсен ăна тата хăяра улăм пĕрчи евĕр туса касатпăр. Сырпа какая тăваткăлласа ваклатпăр. Шĕвекрен сăрăхтарнă пăрçа хушатпăр. Хыççăн майонезпа, тăварпа пăтрататпăр. Салат хатĕр.

## «Love is...» торт

**Торта хатĕрлеме 2 стакан сахăр, 3 стакан çăнăх, 1 стакан йӳçĕтнĕ сĕт, 150 грамм услам çу, 700 грамм сĕт, 2 çăмарта, кăштах ванилин кирлĕ.**

1 стакан сахăра, çур чей кашăкĕ апат содине, йӳçĕтнĕ сĕте, 50 грамм çемçетнĕ услам çăва, икĕ стакан çурă çăнăха хутăштарса чуста çăрмалла. 9 пая пайламалла та çаврашкасем туса йĕтĕрлемелле. Коржсене типĕ çатмара икĕ енчен ăшаламалла.

Халĕ крем хатĕрлемелле. Сĕте вĕретмелле. Çăмартапа юлнă сахăра, çăнăха пăтратмалла та вĕрекен сĕте ярса çăраличчен пĕçермелле. Унтан юлнă услам çу, ванилин хушмалла. Крем сивĕнсен коржсене сĕрмелле те пĕр-пĕрин çине хумалла. Çиелтен вĕтетнĕ шăккалатпа, варенипе е мăйăрпа илемлетме пултаратăр. Торта темиçе сехете сивĕтмĕше лартмалла. Мĕн чухлĕ нумайрах тытатăр, çавăн чухлĕ тутлăрах пулать.

## «Кăмпаçă савăнăçĕ» салат

**Çимĕçе янтăлама 500 грамм шампиньон, çавăн чухлех сухан, кишĕр тата кăштах майонез кирлĕ.**

Кăмпана çӳхен тураса çупа ăшаламалла. Кишĕре шултăра теркăпа хырмалла, сухана тăваткăлласа вакламалла. Уйрăммăн ăшаламалла.

Çимĕçсене турилккене сийпе çак йĕркепе хумалла: кăмпа, сухан, кишĕр. Пур сие те кăшт тăвар сапмалла, майонез сĕрмелле.

## Панулми икерчи

**Икерчĕ валли 500 миллилитр йӳçĕтнĕ сĕт, 300 грамм çăнăх, 3 çăмарта, 100 грамм сахăр, кăштах тăвар, апат соди, 2 панулми, тип çу кирлĕ пулать.**

Тип çупа панулмисĕр пуçне пур çимĕçе те пĕрлештерсе лайăх пăтратмалла.

Панулмие хуппипе вăрринчен уйăрмалла та çӳхерех татăксем туса касмалла. Чустапа хутăштармалла.

Икерчĕсене лайăх хĕртнĕ çатмара кăштах çу ярса ăшаламалла.

● ТЕСТ

# «Мĕн вăл туслăх?»

**Ку теста арçын ачасем те, хĕрачасем те туса пăхма пултараççĕ.**



**1. Эсĕ арçын ачапа (хĕрачапа) туслашма пултараятăн-и?**
А. Çук (2 балл).
Ă. Мĕншĕн туслашас мар? (1 балл)
Б. Паллах. Арçын ачасем (хĕрачасем) пирĕнпе танлаштарсан чăн-чăн туслăх мĕнне лайăхрах ăнланаççĕ (0 балл).

**2. Юлташсем пĕр-пĕрне уявра тата çуралнă кунра парнесем пама тивĕç.**
А. Çук. Чăн-чăн туслăха парнесемпе висмеççĕ (0 балл).
Ă. Çапла. Ун чухне çеç унăн кăмăлне çавăрма май пулĕ (2 балл).
Б. Чи кирли – парнене чун-чĕререн пани тесе шухăшлатăп (1 балл).

**3. Пурте сан çине пăхнине, санпа калаçма ăнтăлнине мĕнле йышăнатăн?**
А. Ку мана килĕшмест (0 балл).
Ă. Эпĕ яланах хаваслă ушкăнпа пулма хăнăхнă. Çавăнпа пурте манпа хутшăнас тенинче нимĕн тĕлĕнмелли те çук (1 балл).
Б. Питĕ лайăх йышăнатăп! (2 балл).

**4. Чĕрчун çын тусĕ пулма пултарать-и? Тĕслĕхрен, йытă е кушак.**
А. Çук. Ку пĕр-пĕрин патне хăнăхни çеç шутланать (2 балл).
Ă. Чĕрчунпа туслашас тесен ăна ăнланма тăрăшмалла (0 балл).
Б. Тен, пулать те пуль ун пекки. Питĕ иккĕленӳллĕ япала (1 балл).

**5. Юлташна пĕлтермесĕрех хăнана килме пултаратăн-и?**
А. Çук. Эпир апла хăтланмастпăр (1 балл).
Ă. Çивĕч сăлтава кура çеç çапла тăватăп (0 балл).
Б. Çапла. Мана курма унта яланах хавас (2 балл).

**6. Тусу пулăшу ытсан тӳрех ун патне васкатăн-и?**
А. Паллах (1 балл).
Ă. Ку ыйтăва татăклăн хуравлаймастăп (2 балл).
Б. Вăл та мана йывăр вăхăтра пулăшма хатĕррине пĕлсен çеç ун патне кайăп (0 балл).

**7. Кĕвĕçӳ, пĕр-пĕрне хирĕç ăмăртни пулать-и санпа тусу хушшинче?**
А. Çук. Нихăçан та (1 балл).
Ă. Йăлтах лару-тăруран килет (0 балл).
Б. Шел те, пирĕн хушăра тăтăшах çапла пулса тухать (2 балл).

**Пĕтĕмлетӳ**

***0 балран пуçласа 4 балл таран.*** Эсĕ çăмăллăнах пуринпе те пĕр чĕлхе тупатăн. Анчах пĕлĕшӳсенчен пĕринпе те туслашмастăн. Мĕн чухлĕ çынпа паллашатăн, çавăн чухлĕ лайăхрах саншăн.

***5 балран пуçласа 9 балл таран.*** Эсĕ пуринпе те кăмăллăн калаçнине çынсем лайăх пĕлеççĕ. Чăн-чăн, шанчăклă туссем те пур санăн. Вĕсенче пĕрре те иккĕленмелле мар.

***10 балран пуçласа 14 балл таран.*** Çывăх тус çукки сана питех те пăшăрхантарать. Сăлтавĕ мĕнре-ши? Тен, хăвăнтах? Пĕр-пĕр çынпа туслашсан чун ăшшине унпа пайламаллине манса ан кай. Туслăх çакăнта тытăнса тăнине асра тыт.

● МОДА

# Кăçал мĕнле тумтир суйламалла-ши?



Кăçалхи кĕркунне тата хĕлле тумтир стилĕ тĕрлĕ фасонлă, пусăрăнчăк кăмăла çĕклентерекен çутă тĕслĕ пулсан аван. Кĕлеткепе килĕшӳллĕн, интереслĕ тата элегантлă пальто, плащ е куртка паянхи сезон ыйтнине тивĕçтерекен тум шутланать. Çавăн пекех пуçа тăхăнмалли те хăйне евĕр (тĕслĕхрен, ансăр шлепке) тата тĕрлĕ вăрăмăшлă, тĕрлĕ фактурăллă перчетке выранлă.

2014-2015 çулхи кĕркунне-хĕлле оверсайз (кирлĕ размертан 3-4 хут пысăкрах тумтир), спорт, милитари (çар тематикипе çыхăннă тумтир), сипанк (фантастикăна сăнлакан тумтир), этника (тĕрлĕ наци тумне, культурине пĕрлештерсе кăтартнă япаласем), casual (кулленхи, ирĕклĕ тумтир) стильсем актуаллă. Хура, сăрă, хăмăр; хĕрлĕ, кăвак, симĕс тĕссен пур сĕмĕсем те; кофе, сĕт, кĕмĕл тĕссем модăпа килĕшӳллĕ. Тăваткалсем, çаврашкасем, йăрăм-йăрăм ӳкерсе илемлетнĕ, тиртен, сăранран çĕленĕ пальто-куртка та модăра.

Вăрăм, сарлака свитер тата леггинссем, скинни джинс (кĕлеткене çăтă тытса тăракан шăлавар) тăхăнсан та модăпа килĕшӳллĕн пулĕ. Çавăн пекех тĕрлĕ эрешлĕ, саспаллисемлĕ свитер, шăтăк-шăтăклă, выранĕ-выранĕпе шуранка джинс шăлавар та туянма пултаратăр. Çăтă тытса тăракан шăлавар вара ку сезонра та чăн-чăн мода хичĕ.

Юбка моделĕсене суйлас пулсан кунта вĕтĕ е шултăра хутламлисене, сарлакисене, кăпăшкисене тимлĕх уйăрмалла. «Кăранташ» модельлисене вара шкапа çакса хума тивет.

Пĕтĕмĕшле илсен çак сезонра кăмăла кайнине йăлтах тăхăнма пултаратăр. Чи кирли – çи-пуç сире тата та илемлĕрех, яштакарах, илĕртӳллĕрех кăтарттăр.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

**Шкул ачисем кăна мар, аслисем те чăваш çыравçисен тăван литературăн ылтăн çўпçине кĕрсе юлнă произведенийĕсемпе юратса паллашаççĕ. Çемьепе тишкернине, пĕрле пухăнса сўтсе явнине епле ырласа йышăнмăн-ха! Шкулта та класс тулашĕнчи вулава хутшăнса ахах-мерченрен те хаклă произведенисене алран-алла илсе вулаççĕ, вулавăшри çўлĕксем çинче те çав е ку авторăн кĕнекисем тусанпа витĕнсе выртмаççĕ. Ав, епле хаклама пĕлет çамрăк ăру çав ĕçсене. Паянтан эпир сире пурте юратса вулакан çыравçăсен ĕçĕсемпе паллаштарма тытăнас терĕмĕр.**

Трубина МАРХВИ

# Хĕллехи каçсенче

*калав*



## I

Вунвиç çулхи Максăм пĕчченех К. ялĕнчи 6 çул вĕренмелли шкула вĕренме çўрет. Максăмăн шкула çитиччченех пĕр лапанкă тăрăх каймалла. Кĕркуннепе çуркунне, çĕр типĕ, çанталăк ăшă чухне, çав лапанкăпа утма пит аван. Лапанкă тăршшĕпе симĕс çерем. Унта-кунта йывăç тĕммисем пур. Çуркунне вара, хĕвел хĕртсе пăхнă чух, Максăм çерем çинчи сар чечексене пăхса утать. Аван çав çулла: ăшă тумтир кирлĕ мар.

Максăм, кĕпе вĕççĕн, çара уран çăмăллăн утса, шкула çитнине те сисмест. Хĕлле... хĕлле апла мар. Ах, мĕншĕн пулать-ши çав хĕл? Пĕтĕм тăлăх туратăн ăшă тумтир пулнă пулсан хĕл пулни те пырĕччĕ. Максăмăн та ак пĕр сăхман кăна. Вăл та пулин ала пек витĕр курăнать. Хулпуççисем çине саплăксем хăпарса ларнă. Çĕлĕкĕ те, ашшĕнчен юлнăскер, çĕтĕк-çатăк. Урине Максăм çăм тăла таткисем çавăрса кĕптĕр-кĕптĕр çăпата сырса ярать. Малтанах шкулти ачасем Максăм тумĕнчен кулма та хăтланчĕç:

– Максăм-Максăм-макакак! Хура чăххи ка-ка-как! – текелесе витлетчĕç. Халĕ ĕнтĕ Максăма ун пек каламаççĕ. Максăмăн ашшĕ çуккине, амăшĕ вĕтĕршакăр ачапа тарăхса пурăннине пĕлчĕç. Çитменнине тата, Максăм хăй аван вĕреннипе часах примерлă ача пулса тăчĕ. Пионер отрядĕнче те, шкулти ĕçсене тума та Максăм ĕлкĕрет. Хастарлă ача çав Максăм. Шкула пĕр кун сиктермесĕр çўрет. Çумăр çăвать-и, юр-и, кутсăр-пуççăр тăман тухать-и – Максăм çапах шкула çўрет. Хĕлле çеç Максăм пит тарăхать. Лапанкăри сукмака тăман шăла-шăла каять. Максăм вара хăш чух кĕртсем урлă ишет. Юр ăшне пилĕк таран пута-пута ларать. Хăй çаплах малалла талпăнать. Сивĕ çил сăхман витĕр каять. Умра та, хыçра та куç курми çил пĕтĕрнет. Сăтăрать çил, касать. Кăткă пек тапаланакан пĕчĕк çынна урнă çил çĕр питĕнчен шăлса пăрахас пек туллать.

## II

Шкулта стурăш пўлĕмĕнче шăп. Лампа çути çавракăшĕнче икĕ мĕлке курăнать. Пĕри – Максăм, кĕнеке çине ўпĕнсе ларать. Тепри – шкулти стурăш, 19 çулхи хĕр, тăлăх Кулюк. Максăм уçă сассипе кĕнекине вулать. Кулюк пĕр шарламасăр кĕнеке вуланине итлесе ларса чăлха çыхать. Максăм кĕнекине сумкине чикрĕ те хаçат туртса кăларчĕ.

– Мĕн тери ырă çав хут пĕлни: мĕн вулас тет, çавна вулать, – терĕ Кулюк.

– Эсĕ хут пĕлместĕн-и-мĕн? – терĕ Максăм хаçата майлаштарса тытса.

– Пĕлместĕп çав. Пĕлес пулсан кĕнекине те, хаçатне те вулăттăм та, пĕлменни хуплать.

– Мĕншĕн вĕренмен эсĕ?

– Анне яман: кĕнчеле арламалла пулнă. Халĕ ĕнтĕ хут вĕренни пит кирлĕ те... Хут пĕлекен хĕрсемпе танлаштарсан, хама хам ытла та шута кĕмен çын пек туйăнать...

Кулюк сасси хуйхăллă. Хура куçĕсем те хуйхăллăн пăхаççĕ. Максăм Кулюк çине пăхса илчĕ те кăшт шухăша кайса тăчĕ.

– Эпĕ сана вулама, çырма вĕрентем, вĕренетĕн-и?

– Вĕренесчĕ те, ма вĕренес мар?

– Юрĕ, кĕçĕрех тытăнăпăр.

Максăм хаçатăн шултра саспаллисемпе çырнă тĕле тытрĕ те:

– «Канаш» тесе вуламалла çакна, – терĕ. Вара кашни саспаллине уйрăм каласа тухрĕ.

Пĕчĕк учитель кăтартать. Çитĕннĕ вĕренекенĕ ĕçпе хытса кайнă пўрнисемпе саспаллине тĕллесе учитель хыççăн тăрăшса калать.

Максăмпа Кулюк пĕр «Канаш» сăмахпа чылайччен аппаланчĕç. Коридорти сехет 12 çапсан çеç çывăрма выртрĕç.

Кулюка хут вĕрентме пуçланă каçран Максăм киле çўреме пăрахрĕ. Хăш чухне эрнере пĕрре кăна кайса килет. Шкулта, Кулюк пулĕмĕнче, Максăма выртса-тăрса пурăнма аван. Шкул пуçлăхĕ Максăма: «Кулюк патĕнче пурăн», – терĕ. Кулюка хут вĕрентме тытăннине пĕлсен пит кăмăллă пулчĕ. Пысăккисене вĕрентмелли букварь, хут пачĕ.

Ачасем шкултан тухса кайсан Кулюкпа Максăм классене тирпейлеççĕ, вара кăмакасене хутса яраççĕ. Çĕрулми, хăш чух яшка пĕçерсе çиеççĕ. Пушансанах Максăм Кулюка хут вĕрентме тытăнать.

Букварь кĕнекипе ĕç малалла пит ăнса пычĕ. Кулюк пĕр-ик эрне хушшинче çырма, вулама вĕренчĕ. Вуласси те, çырасси те начартарах та, çапах картне кĕрет. Виççĕмĕш эрне çинче Максăм Кулюка «Малалла» ятлă кĕнекерен вула-вула пара пуçларĕ, каласа та кăтартать хăш чух. Задачăсем те шутлакалама вĕрентет.

Кулюк савăнăçлă. Хурарах, çинçерех питлĕскер, вăл халь чиперленсе кайнă пекех туйăнать. Кĕнеке вуланă чух вăл кулакан тутине кăшт аллипе хупласа пăшăлтататать.

Çуркуннепе Кулюк хăй çырнипех темиçе тетрадь тултарчĕ, вуласса та ĕнтĕ тĕрĕс, уçă вулама вĕренчĕ.

## III

5-6 çул иртрĕ. Пĕрре Максăм, халĕ хулара аслă шкулта вĕренекенскер, хĕллехи каникула яла килчĕ те хăй вĕреннĕ шкула кайса курас-ха тесе К. ялне йĕлтĕрпе кайрĕ. Халиччен çўрекен лапанкăпа Максăм йĕлтĕрпе яр! та яр! ярăнса çăмăллăн вĕçтерет. Çул çинче Максăм пĕчĕкрех чух çак лапанкăри ишсе тухайми кĕрт çинче тапаланнине аса илет. Куç умне Кулюк сиксе тухрĕ. Хĕллехи каçсенче Кулюка хут вĕрентнине аса илчĕ.

– Ăçта-ши халĕ Кулюк? Çав шкултах стурăшра пурăнать-ши е ăçта та пулин кайнă-ши? – тесе шухăшласа Максăм юр тыттисем хушшипе ярăнса ял патне çитрĕ. Чылай пулать Максăмăн К. ялне килменни.

Максăм шкула кĕрсе тухрĕ. Халĕ ку шкул аслăрах иккен. Халĕ шкулăн тата уйрăм çурт пур – ачасем валли общежити. Унтах ачасене вĕри апат çитереççĕ.

Халĕ ют ялтан вĕренме çўрекен ачасем кашни кун киле çўресе çил-тăманпа тарăхмаççĕ.

Ялĕнче колхоз пит пысăк та вăйлă тенине илтнĕччĕ Максăм. Колхоза кайса курас шухăшпа колхоз картишĕ патнелле йĕлтĕрĕсене шутарчĕ.

Чăн малтан колхозăн сăрт айĕпе тăсăлса каякан вити курăнчĕ. Кăшт уйрăмрах правлени çурчĕ ларать – çĕнĕ, пысăк çурт. Унпа юнашар пекех – клуб. Сăрт айнерех, çăл çывăхĕнче, колхоз мунчипе кĕпе çумалли çурт.

Ун çумĕнчех пысăк кантăклă çўç касмалли пўрт хĕсĕнсе ларнă, хăйĕн вывескипе, çутă кантăкĕпе кĕрсе тухма илĕртет...

Максăм правление кĕчĕ. Правлени пўлĕмĕнче «Тапак туртма юрамасть» тесе çырса çапни пурнăçа кĕрсе пырать пулмалла: çынсем правленире чылай пулин те, пĕри те чĕлĕм туртаканни çук, тапак тĕтĕм шăрши те килмест.

Правление пырса кĕрсенех Максăм сĕтел хушшинче пĕр хĕрарăм ларнине курчĕ. Хĕрарăм та килсе кĕнĕ Максăма пăхать. Кулюк иккен. Кулюк, Максăма палласанах, сĕтел хушшинчен тухса алă тытрĕ.

– Эсĕ кунта... мĕн ĕçре? – терĕ Максăм курнăшăн савăнса.

– Эпĕ-и... Эпĕ колхоз пуçлăхĕ, – терĕ Кулюк.

Максăм Кулюк çине кăшт куçа чарса илсе пăхса тăчĕ те ĕненмен пек:

– Эс колхоз пуçлăхĕ-и вара? – терĕ.

– Колхоз пуçлăхĕ. Çавăрать, пĕтĕрет кăна, – терĕ Кулюк вырăнне пĕр ватăрах колхозник.

– Эй-й, Кулюк, апла эппин, – терĕ Максăм кулса, илтнĕ хыпаршăн калама çук кăмăллă пулнине палăртса.

Бригадирсене ыран уя тислĕк кăларттарма хушса хăварса Кулюк Максăма хăй патне хăнана илсе кайрĕ.

Кулюк пўрчĕ ирĕк, тирпейлĕ. Халĕ Кулюк тăлăх, чухăн хĕрача мар: вăл пуян колхозница. Колхоза кĕнĕ çулах Кулюкпа упăшки иккĕш колхозра нумай ĕçленипе пўрт лартрĕç, выльăх-чĕрлĕх туянчĕç. Кулюк упăшки, совпартшкултан вĕренсе тухнăскер, халĕ клуб пуçлăхĕ. Нумайччен калаçрĕç Максăмпа Кулюк.

Кулюк хута вĕреннĕренпе халăх хушшинче нумай ĕçлеме тытăннă иккен. Чăн малтанах вăл чăх-чĕп эртелĕн пуçлăхĕнче вăй хунă. Вĕренў сахалтарах пулнине кура Кулюк хăй тĕллĕн те вĕренме тăрăшнă, курссене кая-кая вĕреннĕ. Хăй пĕлĕвне çултан-çул ўстерсе пынă. Пĕлў ўснĕçемĕн Кулюкăн халăх хушшинче ĕçлес хастарлăхĕ те ўснĕ. Хальхи вăхăтра К. ялĕнчи колхоз калама çук пысăк çитĕнўсем тăвать. Малтанах колхоз япăх пулнă. Колхоз пуçлăхĕ ĕçме, колхозниксем ĕçленине çаратма юратнă. Кулюк, ял активĕпе пĕрле хытă тăрăшса, сирпĕтрĕ колхозри юрăхсăр çынсене: кулаксене, юлхавсене, вăрăсене.

Колхоз çинчен каласа кăтартнă чухне Кулюк хăй пирки пачах асăнмасть, анчах Кулюк ку ĕçре питĕ нумай вăй хунине Максăм туйса илчĕ.

– Маттур эсĕ, Кулюк. Сан пек хастар хĕрарăмсем ытларах пулсан эпир тата часрах социализм туса хурăттăмăр, – терĕ Максăм.

– Мана эсĕ çакнашкал пулма пулăшрăн, – терĕ Кулюк Максăм çине ăшă куçĕсемпе пăхса.

***1929-1935.***

# Хаваслă 2014 самант

## Пуçватмăшсем

### «Сăвăç тата унăн поэми»




**Сылтăмалла:** 1. Чăвашсен паллă музыка критикĕ. 2. «Ылтăн ...» (Л. Агаков). 3. Чăваш писателĕ. 4. Виçев приборĕсен пайĕ. 5. Полиграфире усă куракан машина. 6. Туй тумĕ.

**Паллă тунă юпасенче чăвашсен паллă сăвăçин тата унăн поэми ячĕсем вуланĕç.**

### «Композитор тата унăн опери»




**Сылтăмалла:** 1. Чăвашсен паллă ӳнерçи. 2. Атте ашшĕ. 3. К.Ивановăн «Нарспи» поэминчи сăнар. 4. Ĕмĕр симĕс тĕм е йывăç. 5. Дирижабль ăсталанă Итали ăсчахĕ, Генерал, Çурçĕр полюс тĕпчевçи. 6. Вырăссен арçын ячĕ.

**Паллă тунă юпасенче французсен паллă композиторĕн хушамачĕ тата унăн оперин ячĕсем вуланĕç.**

### «Ӳнерçĕ тата унăн картини»




**Сылтăмалла:** 1. Вырăссен паллă сăвăçи. 2. Бразилири ту. 3. Çутçанталăкри пулăм. 4. Аргентинăри хула. 5. Тӳпен çурçĕр пайĕнчи чи йăлтăрка çăлтăр. 6. ... Бичурин.

**Паллă тунă юпасенче итальянецсен 15-16-мĕш ĕмĕрсенчи паллă ӳнерçĕ тата унăн картинин ячĕсем вуланĕç.**




## «С» сăмахкаçмăш

**Сылтăмалла:** 7. Тăвай районĕнчи ял. 8. П. Хусанкай çуралнă ял. 11. Хĕр (Дева) çăлтăр ушкăнĕнчи паллăраххисенчен пĕри. 12. Чăваш паттăрĕ. 13. Туйри мăн кĕрӳ сăмахĕн пĕр пайĕ. 16. «... çырнă виç кĕтеслĕ çырусем» (юрăран). 17. Вырăс гидрографĕ, поляр тĕпчевçи. 18. К. Симонов çырнă «Живые и мертвые» романри сăнар. 21. Ĕмĕр симĕс ларакан тĕм е йывăç. 22. Кăнтăр Аравири хăш-пĕр йăхсен пуçлăхĕ. 23. СССРти çăмăл атлет, виçĕ хут Олимп чемпионĕ. 24. Хисеп шучĕ. 29. Австралири хула тата порт. 30. Хими элеменчĕ. 31. Асап, нуша, терт. 35. Испани писателĕ, «Дон Кихот» роман авторĕ. 37. Чăваш писателĕ. 38. Антилопа тĕсĕ. 39. Çанталăка тĕпчекен. 40. Ешчĕклĕ, çӳлĕклĕ çыру сĕтелĕ.

**Аялалла:** 1. Çутçанталăкри пулăм. 2. Чăваш хĕрарăмĕн эрешĕ. 3. Чăваш хĕрарăмĕн пуçне çыхмалли тĕрĕллĕ алшăлли. 4. Индири штат. 5. Арменири кӳлĕ. 6. Хальхи вăхăтри çыхăну хатĕрĕ. 9. Вăрăм дистанцие чупакан çăмăл атлет. 10. Вырăссен паллă музыка критикĕ. 14. Чăваш халăх юмахĕ. 15. Грамматика пайĕ. 19. Ырлăх, тивлет, киленӳ. 20. Африкăри çĕршыв. 25. Сăрă тавраш. 26. Кит тĕсĕ. 27. К. Ивановăн «Нарспи» поэминчи сăнар. 28. Чăваш халăх поэчĕ. 32. Шотландири футбол команди. 33. С. Аслан çырнă повесть. 34. XIX ĕмĕрти Европăри тата Раççейри хĕрарăмсен çи-пуçĕ. 36. Урасăр утать, аласăр шаккать (туп.юм.).

## Пĕр сăмах урлă

### Пуçватмăш

**«КАНАШ» сăмах урлă ытти сăмахсене хăйсен вырăнне çырса хурăр:**




Валак–Калав–Калля–Канаш–Карас–Кăпас–Кăпăл–Кукар–Лăкăр–Ливер–Лисук–Намăс–Наташ–Немов–Пĕлĕм–Сăсар–Сăтăр–Сиваш–Сурăх–Шанар–Эсхил–Этнос–Ялкир.

Аконак–Анилин–Асамат–Ăнкăру–Кăркка–Тамаша–Таната–Тараса.

Алабама–Алабино–Арабист–Аталану–Ăраскал–Иордани–Ляросс–Улатăпа.

## «Çемье» сăмахкаçмăш




**Сылтăмалла:** 4. Пурăнмалли çурт, пӳлĕм. 5. Урамра вырнаçтарнă пысăк калăплă реклама. 7. Дзюдо кĕрешĕвне irттернĕ чух усă куракан кавир.

**Аялалла:** 1. Килти кайăк. 2. Йывăр атлетикăра усă куракан спорт снарячĕ. 3. Тăршшĕ виçи. 6. Хĕрлĕ хĕрлемес хир чăххине хĕрхенмест (туп.юм.). 8. Яппунсен писателĕ, «Женщина в песках» роман авторĕ ... Кобо.

Сăмахкаçмăша шутлама клеткăсене вырнаçтарнă «Атте, анне тата эпĕ» сăмахсем пулăшĕç.

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***